24-мĕш çул ухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
1
ЮНУН
1 (516) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çĕнĕ çул ячĕпе ырлăх тата телей сунатпăр, юлташсем!

1941 ÇУЛ

Енер 1940 çулти календарăн юлашки страницине татса илтĕмĕр. Совет Союзĕнчи халăхсем паян çĕнĕ, телейлĕ 1941 çула кĕтсе илеççĕ.

Авалтан пыракан йăла тăрăх, паян çĕр чĕмĕрĕ çинчи мĕнпур çынсем Çĕнĕ çул ячĕпе саламласа, пĕр-пĕрин аллисене чĕмĕртаса, пĕр-пĕрне телей, сывлăх сунаççĕ. Анчах çĕр чĕмĕрĕн пилĕ улттăмĕш пайĕнче, халлĕхе пуçласа тăракан капитализмлă тĕнчере, «телей» сăмах утлавлăн илтĕнет. Пусмăр тĕнчинчи ĕççыннисем выçлăхсăр, ĕссĕрлĕхсĕр, чиперчĕрсĕр пуçне урăх нимĕнле «телей» те кураймаççĕ. Пĕр Совет Союзĕнче çеç, капиталистсене çĕклесе çапса, рабочисемпе хресченсен влаçне туса хунă çĕршывра кăна ĕçлекен халăх валли чăн-чăн телей тупăнчĕ. Пирĕн халăхсем ыранхи кун мĕнле пурăнассишĕн пĕртте шикленмеççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршывра капиталистсем çук, çĕр улпучĕсемпе эксплуататорсем çук; мĕншĕн тесен ĕçлекен çын хăйĕн пурнăçĕпе хăй хуçа пулса тăчĕ. 1917 çулти Октябрьти аçа-çиçĕм мĕнпур тасамарлăха çунтарса кĕллентернĕ таса çĕр çинче чăн-чăн телейлĕ пурнăç ешĕрет.

1940 çул иртсе кайрĕ. Пĕтме пĕрнĕ капитализмăн кунçулĕ татах тепĕр çултăлăк чухлĕ кĕскелчĕ. Совет Союзĕвара, коммунистла парти, пирĕн çулпуç Аслă Сталин ертсе пынипе, иртнĕ 1940 çулта коммунизма каяс çул çинче тепĕр пысăк утăм турĕ.

Çĕнĕ 1941 çула икĕ тĕнче—капитализм тĕнчипе социализм тĕнчи—икĕ тĕрлĕ итогсемпе кĕтсе илеççĕ. 1940 çул капитализмлă системăна тĕпренех кисрентерсе, çĕнĕ инкексем патне илсе пычĕ. Европăри, Азири тата Африкăри государствăсем империализмлă иккĕмĕш вăрçă пушарĕнче çунаççĕ. Вăрçă малаллах сарăлса пырать, вăл хăйĕн орбитине çĕнĕ çĕршывсемпе халăхсене сĕтĕрсе кĕрет, миллионшар ĕççыннисене çарамас, выçă, çуртсăр-мĕнсĕр тăратса хăварать, ĕç тупаймасăр асапланса пурăнакансен, тăлăх-туратсен йышне ӳстерет, ăрусем ĕмĕрсем хушши туса пынă материаллă хаклăхсене ишĕлчĕк купи туса хурать. Капитализм тĕнчин 1941 çулта та чимĕн-чи ри те кĕтмелли çук.

Большевикла партипе Совет правительствин тулашри сталинла ăслă политикине пула, хăйĕн çарпа экономикаллă хăватне пула пирĕн Совет Союзĕ вăрçа хутшăнмасăр ырă курса пурăнать. «...Пĕтĕм тĕнчене çаван пек вăрçă çавăрса илнĕ вăхăтра вăрçа хутшăнмасăр тăни вăл—пысăк «телей» (М. И. Калинин). Иртнĕ çулта эпир вăрçă провокаторĕсеке—финн белогвардейшинине çĕмĕрсе тăкса хамăрăн çурçĕр-хĕвеланăçĕнчи чикĕсенче шанчăклă хăрушсăрлăх туса хутăмăр. Вăрçă чĕртсе яракансем 1940 çулта совет хĕçпăалĕн вăйне тепĕр хут хăйсен çурăмĕ çинче тӳссе курчĕç, социализм çĕршывĕн воинĕсем Совет Союзĕн никам хăвватайми хăватне пĕтĕм тĕнче умĕнче демонстрацилесе пачĕç.

1939 çулти пекех, 1940 çулта та «...Совет Союзĕ чылаях ӳсрĕ, хăйĕн чикĕсене хĕвеланăç еннелле куçарчĕ. ССР Союзĕ Финский заливăн, Балтий тинĕсĕпе Дунай çыранĕсенче тĕреклĕн çирĕпленсе тăчĕ. Капитализмлă тĕнчен хĕсĕнме тата чакма тиврĕ» (С. К. Тимошенко). 22 çул каялла Румыни боярĕсем Совет Российĕнчен законсăр туртса илнĕ Бессарабири тата Çурçĕр Буковинăри халăхсене тепĕр хут совет халăхĕпе пĕрлештернĕ; Балтика таврашĕнчи виçĕ республика—Литва, Латви тата Эстони халăхĕсем хăйсен пусмăрçисене хăваласа ярса, совет влаçĕ туса хучĕç, хăйсен ирĕкĕпе Совет Союзĕн составне кĕрсе пĕрлешрĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн Союз вунултă республикăна пĕрлештерсе тăракан, 193 миллион çынла аслă держава пулса тăчĕ.

Партин историллĕ XVIII съездĕнче Сталин юлташ лартнă задачăна—капитализмлă малта пыракан çĕршывсене экономика енĕпе те хуса çитсе иртсе каймалла, тесе лартнă задачăна пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн çĕршыв иртнĕ çулта калама çук пысăк çитĕнӳсем турĕ. Сталинла виççĕмĕш пятилетка ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать. 1939 çултипе танлаштарсан, иртнĕ çултаташсем! шултра промышленность туса кăларакан продукци 13,6 миллиард тенкĕлĕх ӳсрĕ. Çĕркăмăк кăларасси, металл шăратасси юлашки 4—5 уйăхра пысăккăн çĕкленсе пыма пуçларĕç. Хура металлургипе цветной металлурги палăрмалла ӳсĕмсемех тăваççĕ. Совет машиностроенийĕ пĕтĕм социализмлă промышленноçа малта пыракан техникăпа хĕçпăаллантарать. Оборона промышленноçĕ пысăк хăвăртлăхсемпе ӳссе пырать, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне хăйĕн продукцийĕпе—самолетсемпе, танксемпе, карапсемпе, тĕрлĕ пушши боевой машинăсемпе пуянлатса, никам касса-чиксе витерейми броняпа тумлантарать. Иртнĕ çулта промышленноçăн вуншар, çĕршер пысăк предприятисене туса пĕтерсе ĕçе кĕртнĕ.

1940 çулта ялхуçалăх енĕпе тунă çитĕнӳсем те пысăк. Çанталăк условийĕсем лайăхах пулмарĕç пулсан та, малта пыракан агротехникăпа хĕçпăаллаппа колхозсемпе совхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Совет Союзĕ 1940 çулта пухса кĕртнĕ пĕтĕм тĕштырă 7 миллиард пăта сывхарать. Социализмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре паллă улшăну пулчĕ. Çак мĕнпур çитĕнӳсене Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче уççăн кăтартса панă. Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕ тăрăх ĕçлесе, колхозсемпе совхозсем 1941 çулта татах та вăйлăрах тухăçлă тырпул туса илессишĕн, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнассишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пыраççĕ.

Иртнĕ çулта Совет правительстви хамăрăн социализмлă тăван çĕршывăн оборонăпа экономикаллă хăватне ӳстерес тĕлĕшпе чылай мероприятисем туса ирттерчĕ. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче, июлĕн 10-мĕшĕнче тата октябрĕн 2-мĕшĕнче кăларнă Указсене пĕтĕм совет халăхĕ чĕре тулли хавасла кăмăлпа саламласа кĕтсе илчĕ, мĕншĕн тесен совет çыннисем пĕлеççĕ: çав Указсем пирĕн предприятисемпе учрежденисенче ĕçĕн çирĕп дисциплинине туса хума, промышленность кăларакан продукцине пахалăхне лайăхлатма промышленноçпа транспорт валли квалификациллĕ ĕç вăйне организованно парса тăма пулăшаççĕ. Производство дезорганизаторĕсемпе прогульщиксем, çынланса-и е ăнланмасăр-и, пирĕн тăшмансене çеç пулăшаççĕ. Акă мĕншĕн пирĕн ĕç дисциплинине пăсакансене текех тӳссе тăха пултараймастпăр.

Совет патриотизмĕн хăватлă вăйĕ 1940 çулта совет çыннисене çĕнĕрен чаплă та тĕлĕнмелле хăюллă ĕçсем тума хавхалантарса çĕклерĕ. Тăван çĕршывшăн çапăсса героизм кăтартнăшăн 405 çынна Совет Союз Геройĕн званине панă, çĕршыв чапне ӳстересшĕн тăрăшса тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунăшăн 9 ученăй-конструктора Социализмлă Ĕç Геройĕн званине панă.

Совет Союзĕнче пурăнакан мĕнпур халăхсен культури—формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культури 1940 çулта çĕнĕ вăйпа чечекленсе кайрĕ. Наукăпа техника чаплă çитĕнӳсем турĕç.

Çĕнĕ çула, 1941 çула кĕтĕмĕр. Сталинла виççĕмĕш пятилеткăн тăваттăмĕш çулĕ пуçланса кайрĕ. Кăçал эпир мĕнле ĕçленинчен виççĕмĕш пятилетка планне тултарасси нумай килет. Совет халăхĕ, Çĕнĕ çула кĕрсе, татах та лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме пулать. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине производствăна çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленсе, рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем социализмлă ăмăртăва вăйлатсах пыраççĕ, хуçалăхлă задачисене кунран-кун, уйăхран уйăха иртерсе тултарма сăмах параççĕ.

Пирĕн партипе правительство тавра, Центральный Комитет тата пирĕн çулпуç Сталин юлташ тавра таччăн пĕтĕçнĕ совет халăхĕ 1941 çулта коммунизмшăн кĕрешсе çĕнĕрен чаплă çĕнтерӳсем тăвĕ.

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ!

Çĕнĕ çул ячĕпе телей сунатпăр, юлташсем!

СУЙЛАВСЕМ УМĔН

КИШИНЕВ, декабрĕн 29-мĕш. (ТАСС). Советлă çамрăк республикăра пур çĕрте те суйлавсен кунĕ çывхарса килни сисĕнет. Кишинев хулинчи Ленински суйлав округĕнче уйрăмăнах савăнăçлă: унта Молдаван ССР Верховный Советне депутата суйланма Сталин юлташ баллотировкăна тăнă. Округри суйлав участокĕсенче суйлавçăсен списокĕсене тĕрĕслесе пĕтнĕ.

Пуласенче, местечкăсенче тата ялте кандидатсемпе суйлавçăсен тĕлĕнулăвĕсем пулса иртеççĕ, вĕсене нумай ĕççыннисем пухăнаççĕ.

Кишинев [illegible] Молдаван [illegible] депутата суйлама [illegible] Кишиневри трамвай [illegible] слесарь Н. Я. Демьянов [illegible] Унта тĕл пулса калаçма тĕтĕм ял — 800 хресчен пухăннă.

Кандидат хăйĕн пурнăçĕ çинчен калаçа панă. Суйлавçăсем ăна ăслă кăмăлпа саламлана. Вал Бендеры уездĕнче арманта ĕçленĕ. Хуçасепе-экс-
[illegible] гунăшăн ăна армантан хăвалас-
Виçĕ çул хушши ĕç тупаймас-
[illegible]ăннă хыççăн, Демьянов юлта-
[illegible]пиневри трамвай депоне ĕçе-
Унта талăкра 14-шар сехет
[illegible]гивнĕ, анчах ĕçукçи тăранса пу-
[illegible]га çитмен. Совет влаçĕ пурнă-
[illegible]васлăхĕ, ĕç хаваслăхĕ кӳнĕ. Тр-
[illegible]деповĕн коллективĕ малта пы-
рабочи-слесарь Демьянов юлташ
[illegible]путата суйлама кандидата тăрат-
Хĕрарăм-хресчен Ольга Ян-
молдаван чĕлхипе хумхануллă
туха калана.

— Николай Демьянов вăл—
[illegible]ын, — тенĕ Яницкая юлташ, —
халăх интересĕсемшĕн тăрăшĕ.
[illegible]лта кам хуçа пулнă-ха? Пом-
урядник, кулак. Халĕ эпир хам-
пурнăçпа хамăр хуçа. Совет
вăл — пирĕн тăван власть. Эпир
те шанчăклă кандидатшăн — Де-
нов юлташшăн сасăлатпăр.

ЛЕНИН—СТАЛИН ПАРТИЙĔ ЕРТСЕ ПЫНИПЕ КОММУНИЗМ ПАТНЕ, МАЛАЛЛА!

ВКП(б) XVIII КОНФЕРЕНЦИЙĔ ЯЧĔПЕ ПЫРАКАН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Çĕнĕ çĕнтерӳсемшĕн кĕрешӳ сарăлса пырать

МУСКАВ. Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Фрунзе ячĕпе тăракан фабрика коллективĕ конференци уçăлнă кун тĕлне планран иртерсе 100 пин метр суровье тата 44 тонна пряжь парассишĕн кĕрешет. Ăмăртăва стахановец-коммунистсем пуçарса пыраççĕ. Вĕсем нормăсене кашни кунах иртерсе тултараççĕ.

«Красная заря» фабрикăра трикотаж цехĕнчи 12 работница тата туллинрех ĕçлемелли ĕçе куçарма ыйтса заявлени панă. Стахановка Пушкарева юлташ 9 машинăна ĕçленĕ çĕртен 11 машинăна ĕçлесси çине куçма йышăннă. Работница Круглова юлташ, «Знак почета» орденĕпе наградăланăскер, плана кашни кунах иртерсе тултарма, норма тăрăх пĕрремĕш сортлă продукци 74 процент парас вырăнне 80 процент пама пулнă. Круглова юлташ плана кашни кунах 118 процент [illegible], пĕрремĕш сортлă продукци [illegible]нт ытла парать.

[illegible]-РОСТОВ. Сталин ячĕпе тă-
ракан «Ростсельмаш» заводăн нумай пин çынлă коллективĕ Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе стахановла вахтăна тăнă.

Социализмлă ăмăртура малти вырăна механосборочнăй цехсен группи, сталелитейнăй тата комбайнсем тăвакан цехсем тухнă, вĕсем çулталăкри плана срокчен малтан тултарнă.

Комсомолецсен-çамрăксен Коренев юлташ ертсе пыракан бригади (серăй чугун цехĕ) норма тăрăх 3.190 форма тăвас вырăнне 5.195 форма тăвать. Кузнечно-прессовăй цехри сварщик Груненко юлташ, лемехсене шăратас тĕлĕшпе сложнăй операцине пурнăçа кĕртсе, пит чаплă результатсем панă, вăл нормăна икĕ хута яхăн иртерсе тултарать.

Ковкăй чугун цехĕнчи слесарь—рационализатор Столяр юлташ партконференци уçăлнă кун тĕлне чугунсе литейнăй цехра стерженьсен формовкине тума пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен станокăн çĕнĕ конструкцине туса пулнă.

СУЙЛАВ ОКРУГĔНЧИ АКТИВ КАНАШĂВĔ

ВИЛЬНЮС, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). СССР Верховный Советне суйламалли кун çывхарса килет. Участоксенчи комиссисем суйлав бюллетенĕсене, пичетсем, протоколсем валли бланкăсем илнĕ те ĕнтĕ. Суйлав кампанине çĕнĕрен те çĕнĕ активистсем хутшăнаççĕ. Рабочисем, хресченсем, вĕренекенсем, служащисем участоксенчи комиссисем паракан ĕçсене юратса, ăнланулăн тата пĕтĕм ответлăхпа туса пыраççĕ. Урамсенче, театрсен фойисенче, вокзалсенче — пур çĕрте те лозунгсем, плакатсем, вĕсем ĕççыннисене январĕн 12-мĕшĕнче хăйсен граждăнла тивĕçне пурнăçлама чĕнеççĕ.

Çак кунсенче 661 тата 662-мĕш суйлав округĕнчи участоксенчи комиссисен председательĕсемпе секретарĕсен тата доверенăйсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлура тухса калакан юлташсем пĕр-пĕрин ĕç опычĕпе [illegible], ĕççыннисен политикăлла активлăхĕ кунран кунах [illegible]парса пыни çинчен, рабочисем, хресченсем, ĕçлĕ интеллигенци пулас суйлавсемпе калама çук пысăккăн интересленни çинчен каласа панă. 26-мĕш номерлĕ суйлав участокĕнчи доверенăй Ляхов юлташ çапла каласа пĕлтернĕ: унăн участокĕнче лайăх ĕçлекен агитколлектив (унта 27 çын) суйлавçăсем хушшинче тăшăх [illegible]нлантару ĕçне туса пырать. Агитколлектив тăрăшнипе 5 кружок организациленĕ, вăл кружоксенче çĕршер рабочисем, служащисем тата килхуçи хĕрарăмĕсем Сталинла Конституцине тата суйлав Положенине вĕренеççĕ.

ÇĔНĔ ÇУЛ ПАРНИСЕМ

ИЕПРЕÇ, декабрĕн 30-мĕш. (Телефонпа). Районри чылай предприятисемпе промартельсем 1940 çулти хуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Çĕнĕ çула производствăри çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешсе, Чернореченскри автобаза IV-мĕш кварталти плана декабрĕн 25-мĕш тĕлнех 105 процент тултарчĕ. Кунта ĕçлекенсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пуçланса кайнă социализмлă ăмăртăва хутшăнса, конференци уçăлнă кун тĕлне 1941 çулти 1-мĕш квартал планне 60 процент тултарма обязательство илнĕ. Автобазăра ĕçлекен шофер-стахановецсем: Иван Малкин—IV-мĕш квартал планне срокчен пĕр уйăх малтан 118 процент, Дмитрий Хударин—145 процент тултарнă.

Буинскри «1-ое Мая» алăсталăх артелĕ 1939 çулта кая юлса пынă пулсан, кăçал ăнăçлăн ĕçлерĕ. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ июнĕн 26-мĕшĕнче тата июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указсене пурнăçа кĕртсе пырса, 1940 çулти производство планне 128,5 проц. тултарчĕ. Уйрăмах вышивальнăй цех лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ — çулталăк планне 300 процент тултарчĕ.

МТС тракторсене юсас ĕçре пысăк çĕнтерӳ турĕ. IV-мĕш кварталта 19 трактор юсамалла пулнă пулсан, вĕсем 22 трактор юсанă. Малта пыракан 1-мĕш бригада çĕнĕ çул тĕлне тракторсене пĕтĕмпех юсаса пĕтерчĕ. Бригадир Николай Яковлев юлташ 1939—40 çулсенче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă. Вăл-ертсе пыракан бригада 1940 çулта трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 205 процент тултарнă, 15 лаша вăйлă кашни трактор пуçне 1055 гектар ĕçленĕ, пĕтĕмпе 3764 килограмм горючи перекотленĕ. Яковлев юлташ хăй кăçал 1116 ĕçкунĕ тунă, вĕсемшĕн 3.348 килограмм тырă, 3.899 тенкĕ укçан илет. Яковлев юлташа 1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма кандидата тăратнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

* * *

ÇЕМЕРЛЕ, декабрĕн 30-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Сталинла виççĕмĕш Пятилетка ячĕпе пуçланнă социализмлă ăмăрту 1940 çулта чылай паха результатсем пачĕ. Рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртупа стахановла движенине сарса пынă май, районри фабрикăсемпе заводсем тата артельсем хăйсен çулталăк планĕсене срокчен тултарчĕç. Ширпов ячĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен артелĕн план тăрăх 1940 çулта 340 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла пулнă пулсан, вăл ăна срокчен 3 уйăх малтан тултарчĕ. Ун хыççăн артель коллективĕ çулталăк вĕçлениччен планран иртерсе татах 230 пин тенкĕлĕх продукци пама обязательство илнĕ. Артель коллективĕ çак обязательствăна та ăнăçлăн пурнăçларĕ. Çапла вара Артель çулталăк планне 166 процент иртерсе тултарчĕ. Чылай стахановецсем—Еремина, Финк, Еремин юлташсем плана 220 процент таран тултарчĕç. Лайăх ĕçленĕшĕн вĕсене пурне те Всекоопромсовет значокĕпе наградăланă.

Кондитерски фабрика 1940 çулти плана 147 процент тултарчĕ. Вăл пĕтĕмпе çулталăк хушшинче 132,8 тонна продукци туса кăларнă.

Квас завочĕн коллективĕ те япăх мар ĕçлерĕ. Çулталăк хушшинче вăл 27.534 литр квас, 42.955 литр морс, 27.615 литр ситро, 9.742 литр английски шыв, 6.334 литр брага туса кăларса, çулталăк планне 112,3 проц. тултарчĕ.

Çулталăк планне срокчен иртерсе тултарнă предприятисем çемĕрлесем татах та чылай.

Халăхи ăхатра пур предприятисенче те XVIII партконференци ячĕпе социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем партконференци уçăлнă куна производствăри çĕнĕ çĕнтерӳсемпе паллă тума конкретлă обязательствăсем илеççĕ, сĕнĕ, 1941 çулта татах та лайăхрах, татах та тухăçлăрах ĕçлеме пулаççĕ.

Х. ЛИСИН.

* * *

Чăвашшвейпромсоюзăн системинчи артельсем 1940 çулти производствăлăн программăна ноябрĕн 20-мĕшĕнче тултарчĕç. Ун хыççăн хушса панă плана декабрĕн 5-мĕшне 800 пин тенкĕлĕх тултарнă. Çапла вара иртнĕ çулта планăран иртерсе куллен кирлĕ таварсене 1.250 пин тенкĕлĕх туса кăларнă.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференци ячĕпе пирĕн системăри артельсенчен нумайĕшĕ социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Ленин ячĕпе тăракан артель, «Красный кустарь» тата «Вышивка» артельсем пĕрремĕш кварталти плана партконференци уçăлнă кун тĕлне 65 процентран кая мар тултарма обязательство илчĕç.

А. ПС
Чăвашшвейпромсоюзăн п
ство отделĕн заведующи

Çулталăкри плана тултарнă

Кӳкеçри инвалидсен артелĕ «Свобода» 1940 çулти производствăлăн планне пĕтлашшинех тултарчĕ. Артелĕн пĕтĕмпе 129.300 тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла пулнă, вăл 180.290 тенкĕлĕх кăларнă.

Артель 1941 çулта татах та лайăх ĕçлессишĕн тăрăшать. Халĕ артельте партин XVIII конференцийĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ.

П. НИКИТИН.

КАНАШРИ П[illegible]ТИСЕНЧЕ

[illegible], (Хамăр корр.). Хулари
[illegible]исенче те партин Х
[illegible]ийĕ ячĕпе пуçланнă со
[illegible]ăмăрту анлăн сарăлса пыра
[illegible]юсакан заводри рабочисе
[illegible]исем, инженерно-техниче
[illegible]иксем конференцине сĕтĕн
[illegible]е илме пулаççĕ. Кузнечнă
[illegible]тивĕ конференци уçăлн
[illegible]ртални плана 65 процен
[illegible]пулнă. Цехсем, бригадăсем,
[illegible] илнĕ обязательствăсене
[illegible]кĕртессишĕн пĕр-пĕринпе
[illegible]хаççĕ.
[illegible] умĕнхи ăмăртăва
[illegible] артелĕпе чăх-чĕп комби-
[illegible]ктивĕсем те, чугунçул ра-
[illegible]те хутшăннă. «Швейник»
[illegible]лективĕ 1-мĕш квартал
[illegible]ăн 15-мĕшĕнче тултарса
[illegible]унçул работникĕсем ян-
[illegible] 130 процент тултарма
[illegible]е тăракан артель кол-
[illegible]улти плана, малтанлăха
[illegible], 134 процент тултарнă.
[illegible]сене 475 пин тенкĕлĕх
[illegible]нă. Халĕ алăстаçăсем
[illegible]конференцине çĕнĕ çи-
[illegible]е илессишĕн кĕре-

ЧИ АСЛĂ ЁМЁТЕ ПУРНĂÇА КЁРТЕТЁП

1940 çула чысласа кĕтсе илнĕ чух, эпĕ пĕтĕм общественность умĕнче аслă Ленин образне сцена çинче кăтартса парасси мана пуринчен ытла хумхантарать, терĕм.

Çак шухăш-кăмăл çулталăк хушшинех манăн пуçран тухмарĕ. Эпĕ çав ĕмĕтпе пурăнтăм, çав ĕмĕтпех халĕ Мускава тухса кайрăм. Мускавра Ленин музейĕнче пулатăп, Ленин образне кăтартса парас ĕмĕте пурнăçа кĕртнĕ искусство мастерĕсемпе тĕл пулатăп. Вĕсенчен эпĕ татах та нумайтарах вĕренсе килĕп.

1940 çула кĕтсе илнĕ чух хамăн ĕмĕте пурнăçа кĕртесси мана иккĕлентерсе тăратчĕ. Паян, çĕнĕ çула — 1941 çула чысласа кĕтсе илнĕ кун, эпĕ пĕтĕм чĕререн савăнса çакна калатăп: хамăн чи аслă ĕмĕте пурнăçа кĕртме эпĕ хатĕр! Ситес кунсенче Шупашкар хулинчи ĕççыннисем аслă Ленин сăнарне Чăвашсен Академин театрĕн сцени çинче курĕç.

Халĕ пĕтĕм ăнăçлăх хамăртан, пирĕн коллектив ĕçĕнчен килет. Çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ май пирĕн татах та лайăхрах ĕçлемелле, хамăрăн мастерлăха ӳстермелле, вара ĕççыннисене пит те чаплă, художество тĕлĕшĕнчен вăйлă та витĕмлĕ, паттăрла спектакль кăтартăпăр.

Б. ПРАУДИН.

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ.

ШУХĂШСЕМ ТАТА ĔÇСЕМ

Пирĕн çĕршывра çамрăксем валли çул уçă. Учитель, врач, инженер, техник, агроном, трактурист, шофер, квалификациллĕ рабочи тата ытти нумай тĕрлĕ професси илме пултарать совет çамрăкĕ. Эпир Канашри ФЗО шкулĕнче вĕренсе, квалификациллĕ рабочи пулма шухăш тытрăмăр. Пире вĕренме илчĕç, шухăшсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ ĕнтĕ.

Шăпах пĕр уйăх вĕрентĕмĕр ĕнтĕ эпир ФЗО шкулĕнче. Кунта киличчен пурте Канаш районĕнчи колхозсенче пурăннă. Хĕллехи вăхăтра шкулсенче вĕреннĕ, çуллахи вăхăтра колхоз производствинче ĕçленĕ. Пирĕн хушăмăрта 300 ĕçкунĕ тунă çамрăксем те сахал мар. Ултă çултан кая вĕреннисем пачах çук. Пире колхозсем вĕренме лайăх ăсатрĕç. Тумтирсем, кĕпесем туянса пачĕç. Халĕ эпир таса та çутă общежитинче пурăнатпăр, таса вырăн çинче выртса тăратпăр, тӳлемесĕрех апатланатпăр. Кантăрла вара ятарласа тунă мастерскойсенче ĕçлесе вĕренетпĕр. Вагонсем юсакан завод коллективĕ, партипе комсомолăн районри, заводри организацийĕсем пире валли вĕренме тата пурăнма лайăх условисем тăвассишĕн сахал мар ĕçленĕ.

Иртнĕ уйăхра мастерсем пире винтмелли приборсемпе усă курма, инструментсене юсама, вагонăн чылай детальсене тума вĕрентрĕç. Вĕренӳ результатĕсене хамăр та куратпăр халĕ. Юлашки кунсенче эпир вагонсем юсакан завод валли чылай детальсем туса патăмăр. Вĕсене лайăх тесе йышăнни пире хытă савăнтарать, лайăх вĕренме хавхалантарать.

Кăçал эпир квалификациллĕ рабочисем-слесарьсем, тимĕрçсем, электросварщиксем пулатпăр. Пирĕн ĕмĕт — ФЗО шкулĕнчен лайăх вĕренсе тухса, производствăра тухăçлăн, стахановла ĕçлеме тытăнасси. Çак ĕмĕт пурнăçа кĕрес пирки эпир пачах та иккĕленместпĕр.

ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем: **Г. Одинцов, И. Данилов, Афанасьев, Максимов, Давыдов, Игнатьев, Соколов, Алексеев, Федоров, Иванов, Сергеев.**

ГЕКТАРТАЧ 300 ПĂТ ТЫРĂ ТУСА ИЛЕР

Вунпĕр çул ĕнтĕ эпĕ колхозра ĕçлетĕп. Юрататăп савăнăçлă колхоз ĕçне. Эпĕ колхозлă пурнăçăр урăх пурнăçпа пурăнма пултарас çук.

Кăçал эпĕ 5-мĕш бригадăра звеньевая пулса ĕçлерĕм. Пысăк ĕç шанса пачĕç мана колхозниксем.

Эпир тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Хĕлле удобренисем хатĕрлерĕмĕр, турттартăмăр, сураккинчен пуçласа кунĕ-кунĕпех уйра ĕçлерĕмĕр. Пур колхозниксемпе колхозницăсем те ĕçе ирех тухатчĕç, каç пулсан тин киле тавăрнатчĕç. Шăрăх кунсенче тырăсене каçхине вырнă.

Манăн звено кăçал вăйлă тырпул туса илчĕ. Кашни гектартан 220 пăт тĕштырă пухса кĕртрĕмĕр. Халĕ колхозниксем пирĕн тырă, укçа-тенкĕ, пахча-çимĕç нумай илеççĕ.

Эпĕ колхозра кăçал 350 ĕçкунĕ турăм. Пĕччен ĕçлесех эпĕ икĕ çул пурăнмаллăх тырă илетĕп. Вылăхсем валли те апат çителĕклех пирĕн.

Эпĕ ялсовет депутачĕ, общественниче ĕçре активлăн хутшăнатăп. Халĕ колхозри стахановла шкула вĕренетĕп. Унта агротехникăна çеç мар, вырăс чĕлхине, математикăна, физикăна вĕренетпĕр. Эпĕ колхоз шкулĕнче отлично вĕренме пултăм. Агротехникăна лайăх вĕренсе вăйлă тырпулăн кĕрешес ĕçре татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвасшăн эпир. Халĕ вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ, Вăрнартан удобрени турттаратпăр. Хамăр звено участокĕсенче юр тытса хăвартăмăр. 1941 çулта гектартан 300 пăт тырă туса илессишĕн кĕрешет пирĕн звено. Çакă вăл пирĕн çĕнĕ çулти чи аслă ĕмĕт. Ана пурнăçа кĕртетпĕрех.

Пелагея НАУМОВА.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Вăрнар районĕ.

Хальхи çынăн ĕмĕчĕ

Хальхи çынăн ĕмĕчĕ:
Ĕмĕр çамрăк çӳрĕччĕ,
Çак тĕнчешĕн,
Çак ялавшăн
Çапăçма-вăрçма чĕнеçеçĕн
Хăйне хăй шеллемĕччĕ.

Хальхи çынăн ĕмĕчĕ:
Инженер вăл пулĕччĕ—
Хĕвеле,
Шыва,
Силе,
Çуллана,
Кĕре,
Хăле
Хăйне майлă кӳлĕччĕ.

Хальхи çынăн ĕмĕчĕ:
Вăл ӳчитель пулĕччĕ—
Тĕрлĕрен âстаçăсем,—
Аслă,
Вăйлă паттăрсем—
Çулсерен вăл
Çĕр-çĕршерĕн
Вĕрентсе ӳстерĕччĕ.

Хальхи çынăн ĕмĕчĕ:
Фельдшер-доктор пулĕччĕ—
Чикĕре хурал тăрса,
Тăван çĕршĕн çапăçса
Унккен геройсене
Вилĕмрен вăл çăлĕччĕ.

Хальхи çынăн ĕмĕчĕ:
Вăл вĕçевçĕ пулĕччĕ—
Кунĕн-çĕрĕн,
Кĕрлĕ-çурлă,
Пĕлĕт витĕр,
Тусем урлă
Хытăран хыт вĕçĕччĕ.

Хальхи çынăн ĕмĕчĕ:
Сăвăç-юрăç пулĕччĕ—
Çак телейлĕ çĕн тĕнчен
Паттăр çынĕсем çинчен
Ĕмĕр юрă юрлăччĕ.

Хальхи çынăн ĕмĕчĕ:
Кремльте вăл пулĕччĕ—
Пĕтĕм чунĕ-чĕринчен
Чи юратнă,
Чи мухтавлă
Сталина ăл тытăччĕ.

В. ÇАВАÇ.

КĂÇАЛХИ ЗАДАЧĂСЕМ

Çĕнĕ, 1941 çулта пысăк ĕçсем тăраççĕ. Студентсене кафедрăн тĕпчев ĕçне явăçтармалла. Хальхи вăхăтра IIIмĕш курсри студент Шигальчов соя культурине сурçĕрти районсене куçарас, Скворцова юлташ — пулса çитекен тата пысăк тухăç паракан соя сортне кăларас тĕллĕпе ĕçлеççĕ. Çак ĕç чаплă результат парасса шантарать. Студентсем хушшинче вĕрентӳ ĕçне туса пынипе пĕрлех, манăн научнăй ĕçсем туса пырас пулать. Пирĕн институт коллективĕн умĕнче пысăк задача тăрать — Чăваш республикинчи колхозсенче курăксем акса тăвас ĕçе тĕпчесе вĕренесси, çав ĕçе йĕркелесси. Институт кафедрисем тĕпчесе вĕренмелли программăсене туса хатĕрленĕ.

Эпĕ ертсе пыракан кафедра курăксем акса тăвас, пусу çаврăнăшне техникăллă культурăсем кĕртес, республикăра акса тăвакан мĕнпур культурăсен тухăçне хăпартас тĕллĕпе ытларах ĕçлеме тытăнать. Çак ĕçсене Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим», Молотов ячĕпе тăракан, Комсомольский районри «Трактор» колхозсенче туса ирттерме палăртнă.

Кăçалхи çул нумай колхозсенче ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх тĕрлĕрен лекцисем ирттермелле. Çак ĕçе институтăн коллективĕ сарлакан хутшăнмалла.

Пирĕн институт çумĕнче январĕн 26-мĕшĕпе февралĕн 2-мĕш хушшинче колхоз председательсен курсĕ уçăлать. Çак курсра эпĕ пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçĕн стахановла агротехники, Чăваш республикинче малта пыракансен опычĕсем çинчен тата Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин чаплă материалĕсем тăрăх лекцисем вуласа паратăп. Çавăн пекех районсенчи парти тата совет активĕ валли организацилеме курссен ĕçне хутшăнни — маншăн хисеплĕ ĕç. Районсене туса тĕрлĕрен лекцисем вуласа паратăп.

Пирĕн республикăри колхозсенче агротехникăна вĕренесси çулран-çул вăйланса пырать. Анчах агротехникăна вĕренмелли лайăх учебник çукха. Эпĕ пуçарнипе кăçал колхоз активĕ валли учебник хатĕрлесе пичетлесе кăлармалла. Учебника çырнă çĕре эпĕ, институтри научнăй работниксем тата растениеводство кафедринчи студентсем хутшăнаççĕ.

Колхозник-опытниксемпе çыхăну тытасси вăйланмалла. 1941 çулта вĕсемпе çу тумалли çĕнĕ тата техникăллă культурăсен тухăçне ӳстерес енĕпе чылай опытсем ирттерме шутлатăп.

Ачасен техникăллă станцисем çĕнĕ культурăсем кăларас тĕллĕпе паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çавăнпа эпĕ вĕсемпе ытларах çыхăну тытса, вĕсене ĕçре пулăшу пама пулатăп.

Кăçал та, иртнĕ çулсенчи пекех, республикăри хаçатсемпе çыхăнса çыхăну тытатăп. Пысăк тухăçлă тырпул туса илес, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕсемпе паллаштарас шутпа «Чăваш Коммуни» хаçатра çине тăрса ĕçлеме пулатăп.

Çĕнĕ çул ячĕпе «Чăваш Коммуни» хаçата вулакансене хĕрӳллĕн саламлатăп.

Профессор ПЕЛЬЦИХ.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн растениеводство кафедри.

ПИТ ТЕ ИЛЕМЛĔ, ЧАПЛĂ ÇУЛТАЛĂК

Вырăс халăхĕн паллă критикĕ Виссарион Белинский 1840 çулти хăйĕн пĕр çырăвĕнче 1940 çулта çынсем телейлĕ пуласси çинчен пĕтĕм чĕринчен шанса çырнă.

Хаяр патша самани пусмăрне пĕтĕм тунĕнчен курайман Белинский çĕр çул ĕлĕк ĕмĕтленни тĕрĕсрен те тĕрĕс пулчĕ, анчах вăл пирĕн телей паянхи пекех пысăк пулассине ниепле те хăйĕн шухăшне шăнăçтарайма пултарайман. 1940 çул этемлĕх историне чи çутă датăсенчен пĕри пулса кĕрет.

1940 çул пирĕн паттăртан та паттăр Хĕрлĕ Çар пĕтĕм тĕнче умĕнче хăйĕн ĕçĕлми хăватне тепĕр хут кăтартса пачĕ, вăл совет халăхĕн телейлĕ пурнăçĕ çине тапăнма хăтланнă бандитсене — белофинсене çĕмĕрсе аркатса тăкрĕ.

Литва, Латви, Эстони, Бессараби тата Çурçĕр Буковина ĕççыннийĕсем капитализм пусмăрĕнчен хăтăлса, тĕнчери аслă халăхăн — совет халăхĕн телейлĕ çемьине кĕчĕç. Пĕтĕм çĕршыв савăнать çак чаплă çĕнтерӳсемпе. Халăх савăнни кашни поэта савăнтарать, унăн вăй-хăватне ӳстерет. Эпир, поэтсем, Ленин — Сталин партийĕ, çулпуçăмăр аслă Сталин ертсе пынипе литература фронтĕнче социализмлă тăван çĕршыва, совет халăхне тивĕçлĕ произведенисем çырассишĕн пĕтĕм чĕререн çунса ĕçлетпĕр. Сталин ячĕ пире ĕçре хавхалантарать, вăл пире çунатлантарать, çĕнĕ шухăшсем парать.

Эпĕ кăçал питĕ пысăк хаваслăхпа ĕçлерĕм. К. В. Иванов çинчен кĕнеке, «Тудимĕр» трагеди, сăвăсен кĕнекине тата «Емĕт» романăн пĕрремĕш кĕнекине çырса пĕтертĕм.

Çĕнĕ çула — çĕнĕ çĕнтерӳсен çулне кĕтĕмĕр. Емĕтсем пирĕн пысăк. Эпĕ хальхи пурнăç çинчен «Тимĕр карта» драма тата «Емĕт» романăн иккĕмĕш кĕнекине çырасшăн.

УХСАЙ ЯККАВЕ.

1941 ÇУЛТА ТАТА ЛАЙĂХРАХ ĔÇЛЕПĔР

Иртнĕ 1940 çулта пирĕн завод ĕçĕнче чылай улшăнусем пулса иртрĕç. Пĕрремĕшĕ—эпир ытти çулсемпе танлаштарсан производство планне срокчен—6 кун малтан тултартăмăр, иккĕмĕшĕ—хатĕр продукци туса кăларассине ӳстертĕмĕр. Çапла, сăмахран, юман экстрактĕнчен тоннида 1940 çулта 76 тонна ытларах туса кăларнă, скумпи экстрактĕнчен тоннида кăларассине те 2,6 процент ӳстернĕ. Урăхла каласан, иртнĕ çулта эпир 1939 çултине танлаштарсан 136 пин тенкĕлĕх ытларах продукци туса кăлартăмăр.

Çак çитĕнӳсем вĕсем рабочисемпе стахановецсем, инженерно-технически работниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пынипе, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ июнĕн 26-мĕшĕнче тата июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указсене пурнăçа кĕртсе пынипе пулнă. Производствăри наянсемпе прогульщиксене тасатса пынă май рабочисен ĕçри хастарлăхĕ чылай хăпарчĕ.

Производствăра чаплă стахановецсем ӳссе çитĕнчĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ 1940 çулта Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ пирĕн заводри 19 çынна Хисеплĕ грамотăсем парса наградаларĕ, 3 çын СССР Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн значокне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Кусемсĕр пуçне тата смена мастерĕ пулнă, халĕ заводра производство заведующийĕ пулса ĕçлекен Миронов юлташа СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ «За трудовую доблесть» медаль парса наградăланă.

1940 çулти хуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленĕшĕн эпир савăнатпăр. Çитĕнӳсем пире малашне татах та хастарлăрах, тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантараççĕ. Кăçал пирĕн продукци туса кăларасси кăштах ӳсмелле. Пирĕн коллектив иртнĕ çулта пулнă ӳсĕмсене çирĕплетсе, çак çулта татах та лайăхрах ĕçлеме пулать. 1941 çул—пирĕншĕн паллă çул пулса тăрĕ.

Н. ИВАНИЦКИЙ,
Çĕмĕрлери «Большевик» завод экономисчĕ.

ПИРĔН РЕСПУБЛИКĂН ПУЯНЛĂХĔСЕМ

Волгостройăн гидрологически партийĕ Атăл тăрăхĕнче çĕре шăтарса вĕренни Чăваш республикин çĕр айĕнче темĕн тухлĕ пуянлăх выртнине палăртнă.

Пирĕн республикăра минеральнăй шыв тупнă. Çав шыв хăйĕн лечебнăй енĕпе Мацеста шывĕнчен пĕртте кая мар. Уйрăм вырăнсенче тарăн шăтарса пăхнă чухне нефть шăрши кĕнĕ. 1940 çулта су вăхăтĕнче Горькири геологоуправлени партийĕ çĕр структурине ӳкерсе илнĕ чухне Пăрачкав районĕнче нефть пуррине палăртнă.

Çак даннăйсем Чăваш республикин çĕр айĕнчи пуянлăхĕ пур геологсене те интереслентернĕ. СССР Госплансĕ 1941 çулта çĕр структурине ӳкерме 500 пин тенкĕ уçса уйăрма палăртнă. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Геологически Главнăй Комитет тата Нефть Халăх Комиссариачĕ 1941 çулта çуркуннерех Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Пăрачкав тата Елчĕк районĕсене геологи енĕпе ӳкерсе илессине организацилеççĕ. Çавăн пекех Тĕрлемес станци районĕнче çак ĕçе туса иртереççĕ.

Чи малтанах ӳкерсе илессине Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсенче ирттерме палăртнă. Нефть Халăх Комиссариачĕ республикăн çĕр айĕнчи пуянлăхне пысăккăн хаклать. Вăл никĕмĕш Бакури чи лайăх электробригадăна пирĕн республикăна куçарма палăртнă.

ÇĔНĔ ÇУЛА КĔТĔМĔР

1940 çул вĕçленчĕ. Çак çулталăк пирĕн çĕршыв пурнăçĕнче пулса иртнĕ пысăк событисемпе паллă пулчĕ. Большевикла парти тата аслă Сталин ертсе пынипе совет халăхĕ коммунизма çитес çул çинче çĕнĕ çитĕнӳсем турĕ.

Иртнĕ çулталăк капитализм тĕнчине тарăн кисрентерӳсем патне илсе пычĕ. Европăри, Африкăри тата Азири капитализмлă çĕршывсенче империализмлă иккĕмĕш вăрçăн çулăмĕ ялкăшать. Юнлă вăрçă пушарĕ çĕнĕрен те çĕнĕ государствăсемпе халăхсене çавăрса илет.

Социализм çĕршывĕ вара хăйĕн хăватне пула, тулашри сталинла ăслă политикăна пула капланса килнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе яма, мирлĕ пурнăçа сыхласа хăварма, хăйĕн чиккисенче хăрушсăрлăхне туса хума пултарчĕ.

Иртнĕ çулхи февраль—март уйăхĕсенче геройла Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ белофинсене — империализмлă вăрçăна чĕртсе яракансен агентурине çĕмĕрсе тăкрĕç. Совет Союзĕ хăйĕн çурçĕр-хĕвеланăç чиккисен хăрушсăрлăхне, пролетариллĕ революцин сăпки пулса тăракан Ленин хулин хăрушсăрлăхне тĕреклетрĕ. Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳ совет патриотизмĕн хăватлă вăйне, совет халăхĕн моралль-политикăллă пĕрлĕхĕн вăйне, социализмлă государствăпа унăн хĕçпăшаллă вăйăсен никам аркатма пултарайми хăватне пĕтĕм тĕнче умĕнче демонстрацилесе пачĕ.

Капитализмлă тĕнчен иртнĕ çулта çĕнĕрен хĕсĕнсе каялла чакма тиврĕ. Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белоруссипе хыççăн Бессарабири, Çурçĕр Буковинăри, Литвари, Латвири тата Эстонири халăхсем капитализмлă сăнчăрсенчен çăлăнса тухса социализм ялавĕ айне тăчĕç. Совет Союзĕнчи халăх йышĕ 23 миллион çын чухлĕ ӳсрĕ, халĕ ĕнтĕ ССР Союзĕнче 193 миллион çын шутланать. СССР—вунпĕр мар, вунултă тăванлă союзлă республикăна пĕрлештерсе тăракан хăватлă держава пулса тăчĕ.

Советсен çĕршывĕ хуçалăх строительстви енĕпе те чылай çитĕнӳсем турĕ. Партин XVIII съездĕнче Сталин юлташ: капитализмлă тĕп çĕршывсене ăка тĕлĕппе те хăваласа çитсе каймалла, тесе лартнă историлăна пурнăçа кĕртес ĕçре иртнĕ çулта ССР Союзĕ малалла кайрĕ. Сталинла виççĕмĕш пятилеткăн аслă планĕсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

Социализмлă промышленность 1940 çулта хăйĕн продукцине 13,6 млрд. тенкĕлĕхе яхăн ӳстерчĕ. Çак ӳсĕме хаклас пулсан, çакна аса илни те çителĕклĕ: 1913 çулта вăрçăчченхи Российăн шултра промышленноçĕ туса кăларнă пĕтĕм продукци те 11 млрд. тенкĕлĕх çеç шутланнă. Çапла вара, социализмлă промышленноçăн 1940 çулти ӳсĕмĕ кăна вăрçăчченхи Российăн шултра промышленноçĕ кăларнă пĕтĕм продукцинчен 24 проц. ытларах пулнă. Усĕмĕн çавнашкал хăвăртлăхĕсене тĕнчери пĕр капитализмлă çĕршыв та пĕлмен тата пĕлме те пултараймасть.

1940 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче халăх хуçалăхĕн топливăпа энергетика тата металлурги бази çĕкленме пуçлани халăх хуçалăхĕн мĕнпур отрасльсем татти-сыпписĕр вăйланса пымалли никĕс пулса тăрать; кăмăр кăларасси тата металл шăратасси уйăхран уйăха ӳссе пыма пуçларĕç. Çĕркăмăрăк тупăсĕнче государство панă плана октябрьне нумай уйăхсенче ирттерсе тултарнă. Çĕршыв планран ирттерсе çĕршер пин тонна кăмăр илчĕ.

Хура металлурги хăвăртлăхсене шанчăклăн ӳстерсе пырать. Хура металлурги Халăх Комиссариачĕн завочĕсенче тăваттăмĕш кварталра продукци туса кăларни планăн заданине сывхарса пырать тата иртнĕ çулти çав уйăхсенче металл кăларнинчен нумай пысăкрах. ССР Союзĕн кăнтăрти тата центральнăй районĕсенчи металлургси заводĕчĕсем металл кăларас тĕлĕшпе государство панă плана ноябрьте ирттерсе тултарчĕç.

Тимĕр руди промышленноçĕ те çĕкленсе пырать. Уйрăмăн илсен, Кривой Рогри горняксем, паллă бурщик Семиволос юлташ пуçарнипе тапранса кайнă движение малалла аталантарса пырса, тимĕр руди кăларас тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултараççĕ.

Цветной металлургси пăхăр, шур тăхлан, алюминий тата никель шăратса кăларассине кварталтан квартала ӳстерсе пырать, çав металсем социализмлă машиностроение оборона промышленноçĕшĕн питех те хаклă чĕртаварсем пулса тăраççĕ.

Социализмлă промышленноçăн чĕри шутланакан совет машиностроенийĕ халăх хуçалăхне техникăн малта пыракан оборудованийĕпе хĕçпăшаллантарса пычĕ. Çĕнĕ типлă станоксем, кăмăрăк тусанĕпе ĕçлекен «ФД» паровозсем, нефть электробурĕсем, газомоторнăй компрессорсем, специальнăй крансем т. ыт. те туса кăларнă.

Оборона промышленноçĕ—пирĕн тăван çĕршывăн мухтавĕпе чапĕ—хăйĕн продукцине туса кăларассине чылай ӳстерчĕ, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне пĕрмаях класлă боевой машинăсемпе, хăвăрт каякан карапсемпе тата кучухнехи çар снарядженийĕн ытти мĕнпур йышши хатĕрĕсемпе пуянлатса пычĕ.

1940 çулта çĕнĕрен чылай хăватлă электростанцисене, заводсене, шахтăсене, рудниксене тата ытти предприятисене ĕçе кĕртнĕ. Угличри 110 пин киловатт мощноçлă гидростанцине, Узбекистанра Чиркискри 43 пин киловатт мощноçлă гидростанцине (малтанхи черетне), Ново-Тагильскинчи металлурги заводĕнчи çĕнĕ домна кăмакисене эксплоатацине панă. Днепрпа Донбасс тата Раухиаллапа Ленинград хушшинчи электропередача линийĕсене тунă, вĕсем халăх хуçалăхĕшĕн пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Усăллă паласем тĕлĕшĕнчен пуян çĕнĕ районсемпе—Слезанскри нефть районĕпе, Мангышлакскри кăмăрăк районĕпе, Халиловскри тимĕр руди районĕпе т. ыт. уса çурма пуçласçĕ.

Социализмла сăрăçăн çитĕнĕвĕсене 1940 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки уççăн демонстрацилесе пачĕ, ку выставкăн участникĕсем кăçал 1939 çултинчен икĕ хута яхăнах ытларах пулчĕç.

Малта пыракан техникăпа хĕçпăшаллаппа колхозсемпе совхозсем, совет агрономийĕн юлашки çитĕнĕвĕсемпе усă курса, 1940 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Суркунне çанталăк лайăхах тăмарĕ пулсан та, çĕршыв туса илнĕ мĕнпур тĕштырăсем 7 миллиард пăта çывхарасçĕ. СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) ялхуçалăх продукцисемпе закупкисене ирттерес политикăри улшăнусем çинчен ăшăнăнă постановлени ялхуçалăхне çăклес ĕçре сырă результат пачĕ те ĕнтĕ. 1939 çултипе танлаштарсан, çĕршывра тырпул акнă площадь 3.200 пин гектар ӳсрĕ. Колхозсемпе совхозсем социализмлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тата ялхуçалăхĕн ытти отрасльсене вăйлатас тĕлĕшпе паллă улшăну турĕç. СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) общественниче вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли мерăсем çинчен ăшăнăнă постановлени пурнăçа кĕртсе пырса, колхозсем юлашки 16 уйăх хушшинче вылăх фермисем 250.000 ытла организацилерĕç.

Иртнĕ çулталăк совет правительстви кирлĕрен те кирлĕ чылай мероприятийĕсемпе палăрса тăрать, çав мероприятисем пирĕн аслă тăван çĕршывăн экономикипе çар хăватне малалла тĕреклетсе пыма пулăшаççĕ. ССР Верховный Совечĕн Президиумĕ июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указпа сакăр сехетлĕ ĕç кунĕ, çичĕ кунлă эрне тунă тата предприятисемпе учрежденисенчен хăйсен ирĕкĕпе тухса кайма чарнă. Июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указпа туса кăларакан мĕнпур продукцин пахалăхне татăклăнах ӳстерес задача лартнă. 1940 çулти октябрьте совет правительстви государствăн ĕç вăйĕсен хăватлă резервисене тума пуçларĕ, çакă вăл социализмлă промышленноçпа транспорта квалификациллĕ ĕç вăйне организованно парса тăма пулăшмалла.

Çак мероприятисем вĕсем пурте пĕрлĕпинпе малтан çыхăнса тăраççĕ, вĕсем халăх хуçалăхне татах та пысăкрах хăвăртлăхпа ӳстерсе пыма, ĕç дисциплининне тĕреклетме, продукци пахалăхне лайăхлатма, предприятисен ĕçĕнче организацилĕхпе производство культурине хăпартма май параççĕ.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăларнă Указсене пĕтĕм çитĕ халăхĕ хĕрӳллĕн саламласа кĕтсе илчĕ, вăл Указсем рабочисен, колхозниксен тата интеллигенцин политикăллă тата производствăллă активлăхне хăватлăн çĕклентерсе ячĕç. Иртнĕ çулта стахановла движенин çĕнĕ, çӳллĕ формисем анлăн сарăлса карĕç. Нумай станоксем çине ĕçлеме куçни, темиçе профессине ĕçлени, ĕçĕн хăвăрт меточĕсем, Ферганă колхозникĕсен чаплă пуçарăвĕ тăрăх каналсемпе çулсем тăвас тĕлĕшпе пуçланса кайнă массăллă движени, колхозсенчи водоемсем строительстви—çаксем вĕсем пурте пĕтĕм халăхăн творчествăллă пуçарулăхĕ икĕлми вăйлăç пек тапса тăнине ӳссĕн палăртса тăраççĕ.

1940 çул—совет науки, техники, литератури, искусстви çĕнĕрен хăватлăн вăйланса кайнă çулталăк пулчĕ. Бурят-монгол, белорусс искусствисен Мускавра пулса иртнĕ декадисем ССР Союзĕнчи халăхсен культури чечекленнине чаплăн ĕнтерсе пачĕç.

Хамăрăн тăван çĕршыва ырлăх кӳрес тата чечеклентерсе пырас тесе совет çынниссем тунă тĕлĕнмелле чаплă та хăюллă ĕçсем—иртнĕ çулăн чи чаплă çитĕнĕвĕ пулать. Белофинсене хирĕç пынă çапăçусенче, ĕçпе наукăн нумай йышлă участокĕсенче советăн çулăмлă патриочĕсем хăйсен хăюллăхĕпе тата миксĕрлĕхĕпе, хăйсен харсăрлăхĕпе тата ĕçри подвигĕсемпе социализм çĕршывĕн аслă ялавне мухтава кăларчĕç.

Белофинсене хирĕç пынă çапăçусенче калама сук чаплă та хăюллă ĕçсем тунăшăн совет халăхĕн 405 шанчăклă ывăлне Совет Союз Геройĕн званине панă. Вунтăр пин боецсене, командирсене, политработниксене орденсемпе медальсемпе тата отличин ытти знакĕсемпе наградăланă.

ССР Союзĕн оборона хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ калама сук чаплă ĕçсем тунăшăн советăн 9 ученăй-конструкторĕсене Социализмлă Ĕç Геройĕн аслă званине панă.

Промышленноçра тата ялхуçалăхĕнче социализмлă ĕç тухăçлăхĕн çĕнĕ маçтерĕсем ӳссе çитĕнчĕç. Вĕсем стахановла, социализмлă ĕçĕн халиччен пулман образецĕсене кăтартаççĕ. Чăнчăн новаторсем, сталинла ученикем пурнипе çав çынсем кивĕ техникăллă нормăсене ӳпĕнтерсе ярасçĕ, кашни хăйĕн участокĕнче производствăна маллала ӳстерсе пыма практикăллă майсем тупса палăртаççĕ, пирĕн аслă тăван çĕршывăн пуянлăхĕсене ӳстерсе пыраççĕ.

* * *

Капитализмлă йĕрitавралăх хăйĕнче мĕнле хăрушлăхсем пытарса тăни çинчен Сталин юлташ кăтартса панисене Совет Союзĕнчи ĕççыннисем çирĕппĕн астуса тăраççĕ. ССР Союзĕн чиккисен лешъенче халăхăн вăхăтра империализмлă иккĕмĕш вăрçă ытларах та ытларах сарăлса пырать. Капитализмлă государствăсем пĕтĕм промышленноçа, транспорта, ялхуçалăхне вăрçа пăхăнтарнă, мĕнпур йышши хĕçпăшалсен производствине каламасть çук пысăккăн ӳстерсе ячĕç. Пĕтĕм тĕнчери обстановка кĕтмен-туман ĕçсемпе хăратса тăрать. Çак условисенче социализм çĕршывĕн экономикипе çар хăватне маллала ӳстерсе пырассишĕн пĕтĕм совет халăхăн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшасси кăçал та кирлĕрен те кирлĕ задачах пулса тăрать.

Промышленность çĕкленĕвне çирĕплетсе малалла та аталантарса пымалла. Çĕршыв валли металл, кăмăрăк, нефть нумайрах памалла, самолетсем, танксем, снарядсем, паровозсем, вагонсем, станоксем нумайрах памалла. Халăх хуçалăхĕн пур отрасльсем те ытларах та ытларах продукци туса кăларччăр!

Промышленноçпа ялхуçалăхĕнче пыранса тăракан çĕнĕ резервсене тупса палăртассишĕн, çирĕп экономикăн тата администрацине управлени расхочĕсене май пур таранах чакарассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешес пулать.

1941 çул ĕç дисциплининне çирĕплетессишĕн, совет продукцийĕн пысăк пахалăхĕшĕн тата технологин çирĕп дисциплининне пăхăнса пырассишĕн вăйăн кĕрешсе пырас паллăпа иртмелле. 1941 çулти хуçалăх строительствин çитĕнĕвĕсенчен Сталинла Виссĕмĕш Пятилеткăн пĕтĕм планне тултарасси нумай килет.

1941 çула Советсен çĕршывĕ творчествăллă çĕнĕ çĕкленӳпе, Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва сарса янипе кĕтсе илет. Çак ăмăртăва хутшăнса, рабочисен, инженерсен, техниксен тата служащисен нумай пин çынлă коллективĕсем хăйсем çине обязательствăсем илеççĕ, çĕнĕ хуçалăх çулĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах производствăллă плансене тултармалла тата иртерсе тултармалла ĕçлеме пулаççĕ.

193 миллионлă совет халăхĕн моралль-политикăллă пĕрлĕхне никам та хавшатма пултараймасть. УСС Республикипе БСС Республикин хĕвеланăç облаçĕсенче тата Карело-Финн Республикинче тĕнчере чи демократиллĕ Сталинла Конституци тăрăх ĕççыннипе депутачĕсен Верховный тата вырăнти Совечĕсене суйлани ĕççыннисем монолит пек пĕрлĕхлĕ пулнине тата вĕсем Ленин—Сталин партийĕ тавра çирĕп пĕтĕссе тăнине тепĕр хут демонстрацилесе пачĕ. ССР Союзĕн халăхĕ Маркăн—Энгельсăн—Ленинăн—Сталинăн вĕрентĕвĕпе çăмăллăннă, коммунизмăн аслă çăмăсемпе хавхаланса çĕкленнĕ большевикла парти тата аслă Сталин ертсе пыракан халăхсем,—социализмлă çĕнĕ çулталăка шанчăклăн та савăнăçлăн пырса кĕреççĕ.

М. ГУТЦАЙТ.

1941 ÇУЛТА ТАТАХ ТА ЛАЙĂХРАХ, ТАТАХ ТА ТУХĂÇЛĂРАХ ЁÇЛЕР!

ÜСЁМСЕНЕ КĂТАРТАКАН ЦИФРĂСЕМ

Колхозлă ялсенчи ёççынннисен экономикăллă тата культурăллă пурнăç условийĕ лайăхлансах пырать. Çĕрпӳ район Совечĕн исполкомĕ çак тĕлĕшпе интереслă сведенисем пухнă. Районра пуçламĕш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсем 60. Вёсенчен кашни çулах çĕршер ача вĕренсе тухать. 1917 çулччен 7 класлă шкулсенче вĕренсе тухнисем 192 çын пулнă пулсан, хальхи вăхăтра вёсен йышĕ 3.551 çынна, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисем 135 çын вырăнне 1.791 çынна, аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисем 18 çын вырăнне 431 çынна çитнĕ.

1917 çулччен, районĕпе илсен, 535 хуçалăх хура пӳртсенче пурăннă. Халĕ хура пӳртсене пачах пĕтернĕ. 1930 çултанпа, урăхла каласан, колхозсем йышланнă хыççăн, районĕпе 2.072 хуçалăх лайăх, çĕнĕ пӳртсем лартнă. Кунпа пĕрлех вёсем культура таварĕсем ытларах илекен пулчĕç. Колхозлă ялсенче 1.576 самовар, 440 велосипед, 1.999 çĕвĕ çĕлекен машина, тĕрлĕ музыка инструменчĕсем 1940.

Халăх сывлăхне упрас тĕлĕшпе пысăк ёçсем тунă. Икĕ больница, куç чирĕнчен сыватакан лечебница, туберкулезпа венерически чирсенчен сыватакан диспансерсем, фельдшер пункчĕсем 8, трахом пункчĕсем 35. Врачсем 17 çын, вăтам медицина работникĕсем 85. Медицина работникĕсем хушшинче чăвашсем нумай.

1917 çулччен Паваркасси ялĕ чухăн ял пулнă. 22 хуçалăх хура пӳртсенче асапланса пурăннă. Халĕ Паваркасси ялсоветĕнчи колхозникĕсем телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнаççĕ. Юлашки 10 çул хушшинче 98 хуçалăх çĕнĕ пӳрт лартнă. Туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисем 326 çын, вăтам шкултан вĕренсе тухнисем 73, аслă шкултан—8 çын. 100 хуçалăхăн çĕвĕ çĕлемелли машинăсем, 45 хуçалăхăн музыка инструменчĕсем пур.

Колхозлă ялсен экономикăллă тата культурăллă вăй-хăвачĕ ӳссех пырать Çакна çӳлте асăннă цифрăсем лайăх çирĕплетсе параççĕ.

Т. МАЙОРОВ.

ЯЛХУÇАЛĂХĔНЧЕ ЁÇЛЕМЕ...

Эпĕ трактористсен бригадирĕ пулма вĕренме каясси çинчен пĕлтерсен пĕрле ёçленĕ трактористсем те темскер иккĕленнĕ пек пулчĕç. Хăшпĕр бригадирсем: «Пул ĕнтĕ, эпир тракторист пулăпăр вара», тесе кулкаларĕç. Мĕншĕн çавăн пек каларĕç вёсем, е эпĕ вĕренме пултарасси çине шанмаççĕ-и мĕн?—çак шухăшсем çавăрса илчĕç мана. Хамăн пурнăç куç умне тухса тăчĕ.

Ялта ӳснĕ. Ачаранах тăлăха юлнă. Вĕренме пултарайман, ликпунктра 5 уйăх çеç вĕреннĕ. Çапах та эпĕ 1938 çулта трактористсен курсĕнче вĕренме тата тракторист пулма пултартăм вĕт. Ишлей МТ Станцинче ёçленĕ вăхăтра трактора татах та вĕрентĕм. Мĕншĕнха бригадир пулма пултарас çук? Шутларăм: вĕренме кайма шут тытрăм.

Халĕ акă Канашри механизаци шкулĕнче. Кунта пурăнма лайăх. Общежитири ăшă та таса. Шкул çывăхĕнчех столовăй пур. Уйăхсерен стипендипарса тăраççĕ. Трактора, комбайна вĕренме пособисем, учебниксем çителĕклĕ. Классенчех тракторпа комбайн палăсемпе тĕплĕн паллашма пулать. Кунтах пире арифметикăна, агротехникăна вĕрентеççĕ. Манăн вĕренӳ результачĕсем япăх мар. Ытти юлташсем те вĕренӳре юлмаççĕ. Эпĕ çеç мар, кунта хĕрарăмсем ним йывăрлăхсăрах трактор тата комбайн çинче вĕренме пултараççĕ.

Тепĕр виç-тăватă уйăхран эпир курсран вĕренсе тухатпăр, вара ялхуçалăхĕнче ёçлеме каятпăр. Лайăх, хисеплĕ ёç. Эпĕ çĕнĕ МТ Станцине кайса çуллахи вăхăтра тухăçлăн ёçлесе хамăн пĕлĕве малалла ӳстерме практикăра опыт илетĕп. Ку мана хамăн ёмĕте — механик пулас ёмĕте пурнăçа кĕртме пысăк пулăшу парĕ. Çакă вăл манăн пурнăçри палла вăхăт пулать.

Е. ГРИГОРЬЕВА.
Канашри механизаци шкулĕнче вĕренекен.

ÇĔНĔ ÇУЛ ЮРРИСЕМ

Ылттăнах та часси чӳречинчен
Ылттăнах та куккук, ай, авăтать,
Ылттăнах та çулĕ çитни çинчен
Ылттăн çунат çупса вăл хыпарлать.

Ир ут килет, килет, ай, ытăнса,
Пусне уха, шыв пек, ай, юхăнса —
Çĕнĕ çулĕ килет çĕнĕ çулпа
Çĕнĕрен те çĕнĕ ырлăх сунса.

Тухар-и те илер-и тулли, ай, куркапа,
Сирсе те сирĕлми сĕм-пылпала.
Тытар-и те пуçлар-и, ай, юррине
Кĕмĕлех те шăнкравлă саслине.

Пирĕнех те колхоз, ай, уйăнче
Çăхан шывсем юхаç кĕмĕл суса,
Пирĕнех те колхоз, ай, садĕнче
Саркайăксем юрлаç саркаланса.

Пирĕнех те колхоз, ай, уйăнче
Туллийĕсем ӳсеç, ай, кашласа.
Пирĕнех те колхоз, ай, витинче
Урхамахсем тăраç, ай, ташласа.

Пĕлекенсем пĕлсе калаççĕ-çке,
Куракансем курса калаççĕ-çке —
Маттур çынсен телей, ай, пур иккен,
Çавă, ай, маттурсем эпир иккен.

Ай-хай, тăванăмсем-ылттăнăмсем,
Саттурах та колхоз, ай, йышĕсем,
Пурăнар-ха çапла, ай, ыр курса
Шăкăлах та шăкăл, ай, калаçса.

Пурăнар-ха çапла, ай, савăнса,
Ёмĕрех те ёмĕр пĕр-пĕринпе
Чĕвĕлех те чĕвĕл, ай, юрласа,
Пĕр йăвари чĕвĕл чĕкеççем пек.

Пурăнар-и пурçăн, ай, пурнăçне,
Ёмĕрлер-и кĕмĕл, ай, ёмĕрне,
Йĕрсĕр çĕре йĕрсем те, ай, хывса,
Çитмен çĕре çитсе те, ай, курса.

Упийĕсем çине эпир тухсан —
Упаленсе пĕри, ай, тăрар мар,
Кашкăрĕсем çине эпир тухсан —
Каркаланса пĕри, ай, тăрар мар.

Ентĕех те Совет, ай, чикинчен
Тăшманĕсем каçма, ай, пикенсен —
Тыттарар-и хăлха, ай, чикинчен,
Маттурах та маттур, ай, йĕкĕтсем.

Хаваслă та юрă, ай, юрласа
Çăвĕсем те килеç, ай, çăвĕпе,
Йăлтăрах та йăлтăр мерчен çуса
Хĕлĕсем те килеç, ай, хĕлĕпе.
Пурăнар-ха çапла, ай, ыр курса
Сталинах та атте ырлăхĕпе.

ГРИГОРИЙ КРАСНОВ.

ТРАХОМА ПĔТЕРЕР

Вунтăватă çул каярах, 1926 çулта Канашра куç чирĕнчен сыватмалли лечебница уçнă. Тепĕр пиллĕк çултан лечебница валли пысăк чулçурт туса лартнă. Вăл вара Совет Союзĕнчи пысăк лечебницăсенчен пĕри тата Чăваш республикинче трахома пĕтересшĕн ёçлемелли центр пулса тăнă. Унта куç чирĕнчен сыватакан кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ёç пуçланнă. Курссем туса ирттерсе сестрасем хатĕрленĕ, врачсен квалификацине ӳстернĕ. Тăватă çул хушшинче курссенчен 500 çын ытла вĕренсе тухнă, çав çынсемех хайран тĕрлĕ курссенче хăйсен квалификацине хăпартнă.

Канашра 1935 çулта трахоматознăй институт уçнă. Вăл республика валли врачсем хатĕрлесе паратчĕ. 1937 çулта вара институт Шупашкара куçрĕ. Кун хыççăн Канашра лечебница кăна юлнă. Унта 120 койка пур, пысăк квалификацияллĕ врачсем 4 çын тата сестрасем ёçлеççĕ. Районра трахома пĕтересшĕн кĕрешес ёçе ăнăçлăн организацилеме кадрсем çителĕклĕ.

Иртнĕ çулти декабрĕн 16-мĕшĕнче Шупашкарти трахоматознăй институт туса ирттернĕ научнăй конференцире республикăра трахома пĕтерес ёç çителĕксĕр пыни палăрчĕ. Трахомпа чирленкенсен хисепĕ 1940 çулта 1939 çултинчен чакман. Трахом пуянчĕсем пурте мар йĕркеллĕ ёçлеççĕ-ха. Ку ĕнтĕ пире, медицина работникĕсене, хамăран иртнĕ çулсенчи ёçсене тĕплĕн тишкерсе тухса кăçал трахома пĕтерес тĕлĕшпе лайăх ёçлеме татăклă мероприятисем тума хушать.

Пирĕн районра, 1934 çулта шута илнĕ тăрăх, трахомпа чирлекенсем 30 процент ытла шутланнă. Иртнĕ ултă çул хушшинче медицина работникĕсем общественноçпа таччăн сыхăнса ёçленине сахал мар çитĕнӳсем тунă. 1928 çулччен кăна 4613 çынна трахомран сыватса çитернĕ. Халĕ вара, районри сывлăха сыхлав пайĕн отчечĕ тăрăх, трахомпа чирлекенсем 11 процент шутланаççĕ. Вăл тĕрĕс тесе ăнланма хĕн. Мĕншĕн тесен врачсем тĕрĕсленĕ хыççăн урăхла цифрăсем палăраççĕ. Çапла 1940 çулта трахоматознăй 1577 çынна сыватнă шутланать. Ку таринччен врачсем 433 çынна кăна тĕрĕслесе йышăннă. Пирĕн малашне трахомран сыватнă çынсене врачсем тĕрĕслес ёçе тĕпренех лайăхлатмалла. Ку тĕлĕшпе сывлăха сыхлав пайĕн ытлараx ёçлес пулать.

Кăçал шкул ачисем трахомпа чирленнине пĕтересси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Вăл тĕлĕшпе иртнĕ çулсенче ёçсем питех çителĕксĕр пулса пынă. Вĕренӳ çулĕ вёçленнĕ тĕле ялнах шкул ачисем хушшинче трахомпа чирлекенсен хисепĕ нумай чакнă. Анчах тепĕр çулта, вĕренӳ çулĕ пуçланнă чухне, чирлисен хисепĕ татах малтанхи вёсене çитнĕ. Ку вăл шкул ачисене трахоман сыватас тĕлĕшпе çуллахи каникул вăхăтĕнче ёçлемен пирки пулнă. Тĕрĕссипе илсен, шкул ачисем хушшинче трахома пĕтерме чылай çăмăлтарах. Трахработниксем тата учительсем ёçе тимлĕн тытăнни çеç кирлĕ.

Хĕрлĕ Çар призывĕ призывниксене трахоман сыватас тĕлĕшпе лайăх результатсем пулнине кăтартса пачĕç. Трахомлă пулнă пирки Хĕрлĕ Çара кайма юрăхлă пулманнисем пурĕ те 7 çын çеç пулнă. Трахоман сыватас тĕлĕшпе çавăн пек паха результатсене эпир хамăран ёçе тĕрĕс организацилесе пынипе турăмăр. Шкул ачисем енĕпе те пирĕн çавăн пек ёçлемелле. Халĕ эпир хамăр умма 1941 çулта призыва кĕмелли çамрăксем хушшинче трахома тĕпренех пĕтерес задача лартрăмăр. Вăл задачăна пурнăçа кĕртетпĕр. Халĕ трахоматорий хĕрӳллĕн ёçлет. Анчах трахоматорий ёçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар. Çурт начар, продуктсене усрама складсем çителĕксĕр т. ыт. те. Калас пулать, пĕр трахоматоринче вёсĕке вăхăт хушши сыватнипех трахома пĕтерме йывăр. Ялсенчи пур трахомработниксем те активлăн хутшăнса ёçлемелле.

Трахома—йăлари чир, вăл культурăллăх, тасалăх çук çĕрте сарăлма тултарать. Апла пулсан пирĕн ёççынисене культурăллă пурăнма тата вёсене санитари йĕркисене вĕрентес тĕлĕшпе çине тăрса ёçлемелле. Трахом пунктне çынсем лайăх кăмăлпа çӳретчĕр тесен вёсенче культурăллă йĕрке тумалла, трахработниксен хăйсен культурăллă пулмалла. Ёççынннисем хушшинче медицина пропагандине анлăн сармалла. Ку ёçре хулари тата ялсенчи совет интеллигенцин вырăнĕ питех те пысăк. Учительсем, агрономсем тата служащисем халăх хушшине культура сарас тĕлĕшпе нумай ёç тума тултараççĕ. Вёсен ăна тумалла та.

Партипе советăн тата комсомолăн активĕ, совет интеллигенцийĕ ёçе активлăн хутшăнса, куллен пулăшса пырсан эпир, медицина работникĕсем, патша самани юлашкине—трахома çывăх вăхăтрах пĕтерме тултаратпăр.

А. И. АНАНЬЕВ.
РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ.

КĔСКЕН

▲ МТ Станцисем ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене хатĕрлеме чугун шăратас ёçе тытăнаççĕ. Çак ёçе пурнăçлама 1941 çулта 60 тонна кокс кӳрсе килме палăртнă.

▲ Чăваш республикинчи МТ Станцисем тата хурçă кӳрсе килес плана вирçĕ хут ӳстерсе тултарнă: 130 тонна вырăнне 400 тонна ытла кӳрсе килнĕ.

ЭПĔ КАЛЛЕХ КУРАТĂП

(А. М. Максимова колхозница каласа пани)

Пружинăллă ёçмçе кровать çинче çамрăках мар хĕрарăм выртать. Вăл хăйĕн тусĕсене çапла каласа парать:

— Ку 1938 çулти январĕн пĕрремĕшĕнче пулчĕ. Паянхи пек астăватăп, ир-ирех вырăн çинчен тăтăм. Хăй сутас тетĕп, анчах нимĕн те курмастăп. Утса çӳретĕп, чĕре вырăнта мар. Упăшка вăранчĕ. Ачасем те вăранчĕç. «Анне,—кăткăраççĕ ачасем,—мĕн пулнă сана?—Эпĕ чĕнместĕп, чĕре çинче чул выртнăн туйăнать, йывăр...

Чи телейлĕ çын пулса тăтăм эпĕ. Йĕри-тавра тĕттĕм, шавланине, ачасен сассине илтетĕп, анчах нимĕн те курмастăп.

1939 çулти май уйăхĕччен çапла пурăнтăм. Вара Шупашкарта куçсене сыватни çинчен илтрĕм. Сĕнĕ куç лартаççĕ унта,—теччĕç кӳршĕсем. Пĕрремĕшне колхоз председателĕ пирĕн пата пычĕ те, çапла каларĕ:

— Анастасия Максимовна, Шупашкара кайса кил-ха. Унти трахом институтĕнче роговицăна куçарса лартаççĕ тет,—терĕ вăл.

Малтанах ёненмерĕм, çапах та лартăм та Шупашкара хилтĕм. Çитрĕм. Врач Шульпенкова манăн куçа сăнаса пăхрĕ те ыйтрĕ:

— Максимовна, курăкан пулас килет-и?—терĕ.

— Питех те курас килет,—терĕм.

Малтан пĕр куçне операци турĕç, геприне каярахпа тăватпăр терĕç.

Киле тухса кайрăм. Вăрмар станцине çитрĕм, кунтан пирĕн ял, Арапуç ялне пилĕк километр. Колхозран лаша килессе кĕтмелле, чун чăтмасть, хăвăртрах киле çитес килет. Çурран уттартăм. Мĕн пек савăнăç! Çулпа пыратăп, колхозницăсем тырă вырассĕ. Еçе пăрахсах мана хирĕç чупса пычĕç. Савăннипе макăраççĕ, эпĕ те макăратăп. Эпĕ курнине ёненмеççĕ. Апла-капла калаçнă май, хĕвел анса ларнине те асăрхаман. Киле çитрĕм—ачасем те, упăшка та килте çук.

— Аçта вёсем?—ыйтатăп кӳршĕсенчен.

— Арманта,—теççĕ вёсем.

Арман пирĕн ялтан икĕ километрта. Эпĕ—унта. Савăнăçăн вёçĕ-хĕрри çук. Хавхаланса каласа панă май хамăн аслă ывăл Пимен арманта çуккине асăрхаман та.

— Вăл больницăра выртать,—терĕ упăшка.

Эпĕ тул çутăласса кĕтрĕм. Шуçăм çутти килсенех—больницăна тухрăм. Сестрасем эпĕ курнине ёненмеççĕ.

— Кăтартăр мана ачана, эпĕ ăна икĕ çул курман!

Сестра Пимена кĕтесе, инçе кайса лартрĕ.

— Куратăр-и?—ыйтаççĕ.

— Куратăп, куратăп!

Эпĕ ача патне чупса пытăм. Мĕн пек савăнăç, мĕнле сăмахпа уçса парам çак савăнăçа!

Пимен йĕрет, манăн та савăнăç куççулĕ юхать. Ача эпĕ курнине ёненмест, куç çине тинкерсе пăхать. Чӳрече умне çавăтса пычĕ.

— Анне, яла куратăн-и?

— Куратăп, ывăлăм, куратăп!

Нумай пурăнмарăм эпĕ ялта. Каллех Шупашкара килтĕм. Иккĕмĕш куçне операци тутарма килтĕм.

Операци турĕç. Чĕре туять: манăн икĕ куçĕ те курассĕ!

Курассĕ, тусăмсем, манăн куçсем курассĕ!

• • •

Максимова вёçĕмсĕр савăнать. Вăл кучухнехи ăста специалистсене—врачсене пăхса ӳстеринĕшĕн Сталин юлташа пĕтĕм чĕререн тав тăвать. Сталин совет çынннисене сывлăх парать, куракан тăвать, вăй кӳртет, çамрăклатать. Тав Сталина, хамăран аслă, тăван атте мĕре!

Активистсем стахановла шкулта вĕренеççĕ

Карăлăра (Канаш р.) колхозри активистсем валли стахановла шкул организациленĕ. Шкул ёçе тытăнчĕ. Унта Карăклă ялсоветне кĕрекен колхозсенчен 18 активист вĕренеççĕ. Занятисене агрономсем ирттереççĕ.

(Хамăр информаци).

ПĔР ЁМĔТ—ЛАЙĂХРАХ ЁÇЛЕС

1940 çул вёçленчĕ. Пирĕн аслă тăван çĕршыв хăйĕн çитĕнĕвёсене палăртать.

Паян çĕнĕ çулăн пĕрремĕш кунĕ. Совет халăхĕн туслă çемьинче кашни çынăн задани пур, вёсен пурни те пĕр ёмĕт—татах та лайăхрах ёçлес, тăван çĕршывăн вăй-хăватне, унăн тĕреклĕхне хăпартас ёмĕт.

Атă-пушмак цехĕнчи эпĕ ӳртсе пăракан, Ленин ячĕпе тăракан бригадăн 1940 çулта куçсерен 110 мăшăр атă-пушмак туса кăлармалла пулнă. Кăçал плана икĕ хута яхăн ӳстерĕ—пирĕн кашни кун 200-шер мăшăр кăлармалла пулать. Рабочисен йышĕ пĕлгĕрхи чухлех юлать.

Çак задачăна пурнăçа кĕртме пултаратпăр-и эпир? Сăмах та çук, пурнăçа кĕртетпĕр. Пирĕн цехра çĕнĕ, лайăх оборудовани нумай. Вёсене туллин ёçлеттерни кăна кирлĕ.

Стахановла ёçлесен кирек мĕнле заданине те пурнăçа кĕртме пулать. Пирĕн бригада хăшпĕр чухне виçшер норма тултаратчĕ. Сăмахран, декабрĕн 24-мĕшĕнче 110 мăшăр вырăнне 320 мăшăр атă-пушмак туса кăлартăмăр.

Лайăх ёçлеме — лайăх ёç вырăнĕ кирлĕ. Пирĕн тухăçлăн ёçлесе культурăллă канмалла. Пирĕн час-часах çакăн пек пулать: тивĕçлипе ёçлейместпĕр те, канаймастпăр та. Ун пек чухне электроэнерги парасса, пĕрпĕр машинăна юсаса парасса кĕтсе тăратпăр.

Производствăра ытти çитменлĕхсем те нумай. Хăшпĕр чухне халăпсем пулмаççĕ. Сăмахран, пирĕн бригадăн 38-мĕш виçене пушмак çĕлеме задани пулать. Анчах калăп çитмест. Ун пек чухне вара кирек-мĕнле ёçле. Куншăн дирекци айăплă. Вăл пĕр виçеллĕ калăпсем кăна илсе тултарнă. Сушилка начар ёçлет. Пăс вăхăтра парса тăмасть, çавăнпа простойсем пулаççĕ. Хатĕрлекен цех та çителĕклĕ полуфабрикат парса тăраймасть.

Çак çитменлĕхсене пĕтермелле, вёсем пачах пулмалла мар.

Чи хаклă капитал—çынсем,—тет Сталин юлташ. Пирĕн бригадăра çĕнĕ çынсем, стахановецсем сахал мар. Акă вёсем. Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ Жукова юлташ икĕ профессипе ёçлет, стахановец Аникин юлташ икĕ машина çинче ёçлеме вĕренсе çитрĕ т. ыт. те. Стахановец Мелидонов юлташ хăйĕн нормине яланах 140 процент, Прохоров юлташ—160, Ильина юлташ—200 процент тултараççĕ. Бригадăра нормăна тултарман рабочи çук. Вёсем пурте стахановецсем.

Ырăн çĕнĕ çулăн иккĕмĕш кунĕ. Эпир 1941 çулти плана тытăнатпăр. Бригада партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Конференци уçăлнă кун тĕлне пирĕн комбинат коллективĕ планран ирттерсе 800 мăшăр атă-пушмак туса кăларма сăмах панă. Çак шутран пирĕн бригадăн 400 мăшăр туса кăлармалла. Комбинат коллективĕ илнĕ обязательствăран та ирттерсе эпир татах 100 мăшăр атă-пушмак туса кăларатпăр. Çак обязательствăна манăн бригада пурнăçа кĕртетех.

Çĕнĕ çулта эпир татах та лайăхрах ёçлетпĕр, техникăна вĕренетпĕр. Стахановла ёçлесе тăван çĕршывăн хăватне татах та темиçе хут ӳстерессишĕн, çĕршыв оборонине тĕреклетессишĕн большевикла кĕрешетпĕр.

П. РЫБАКОВ.
Водопьянов ячĕпе тăракан тирсăран комбинатĕнчи атă-пушмак цехĕн смена мастерĕ.

САВĂНТАРАКАН ИТОГСЕМ

Пирĕн колхозра кăçалхи тупăшсене валеçес ёç вёçленсе пырать. Халĕ колхозниксем ёçкунĕсем тăрăх валеçнĕ гырăсене, укçа-тенкĕ, пахча-çимёссене ялсе пĕтереççĕ. Улăмсене те валеçсе пĕтеретпĕр. Калас пулать, хăшпĕр колхозниксем тырăсене, пахча-çимёссене ялме васкамаççĕ, вёсене хума вырăн çук, теççĕ. Вăл чăнах та çапла. Иртнĕ çулхи тырăсем те колхозниксем амбарĕсенче сахал мар, халĕ вёсем тăватçĕршер, виççĕршер пăт тырă, çĕршер пăт пахча-çимĕç, вырăн кăшманĕ илеççĕ.

Акă 4-мĕш бригадăри колхозник Илья Миронов çемьи 400 пăт тырă, 730 пăт пахча-çимĕç, 850 тенкĕ укçа илет. Пирĕн хăшпĕр колхозниксене колхоз правленине чĕнсе илсех тырăсене, пахча-çимёссене часрах илсе кайма хушмалла пулчĕ.

Кăçал ахаль те тырăсене усрама амбарсем çитмеççĕ. Халĕ эпир çĕнĕрен, лысăк амбар тума пуçларăмăр.

Кăçал пирĕн колхоз сорткăн паракан надбавкăпа шутласан пĕтĕмпе 18.735,88 центнер тырă пуçтарса кĕртнĕ. Кун чухлĕ тырă эпир инкăçан та пуçтарса кĕртмен. Тырă пирĕн нумай. Эпир государствăна 3705 центнер лайăх тырă патăмăр. Кунта обязательнăй ĕлкĕпе пани те, натуроплата та тата кооперацине сутни те кĕрет.

Тырра тирпейлĕ тыталамалла. Эпир вăрлăх фончĕ валли 1400 центнер, вăрлăхлăх страховой фонд—784 центнер, выльăхсем валли фураж 3000 центнер тата ун çумне 400 центнер страхфонд, продовольстви фондне 1600 центнер тырă хăвартăмăр. Ачасен ясли валли тата инвалидсем валли 150 центнер укăрса хунă.

Колхозниксем пухăнĕ пирĕн плана пысăк хаваслăхпа çирĕплетрĕ. Пур колхозниксемпе колхозницăсем те колхозăн обществăллă пурлăхне вăйлатассишĕн, колхоза пуян, культурăллă тăвассишĕн тăрăшаççĕ. Пирĕн колхозăн тупăшĕсем те нумай ӳсрĕç. Пĕлтĕр колхозăн пĕтĕм тупăшĕ 238.698 тенкĕ пулнă, вăл шутран укçа тупăшĕ 167.012 тенкĕ пулнă. Кăçал, малтанлăха шутланă тăрăх, пĕтĕм тупăш 500.000 тенкĕ, вăл шутран укçа-тенкĕ тупăшĕ 300.000 тенкĕ пулать. Тупăшсем ӳсни колхозăн пур отраслисене те анлăн сарса яни çинчен калаççĕ. Халĕ эпир уйăхир ёçĕнчен çеç мар, вырăн-чĕрлĕхрен те, пахча-çимёçĕнчен те, армансенчен те пысăк тупăш илетпĕр. Пирĕн колхозăн уйăрăлми фончĕ пĕлтĕр 610.000 тенке çитнĕ, кăçал вăл татах та пысăк пулать.

Эпир кашни çулах пуянланса, тĕрекленсе пыратпăр. Кăçал колхозра çĕнĕрен больница, амбулатори, электростанци, почта, радиоузел, ача ясли турăмăр. 1941 çулта строительство ёçĕ тăрах та ытларах ӳсет. Пирĕн парк, сад, канмалли çурт тумалла, урамсене чул, тротуар сармалла. 50 колхозник хăйсен пӳрчĕсене çĕнĕрен пĕр планпа тăваççĕ. Вăл пӳртсенче 3—4-шар пӳлĕм пулать.

Çак пĕтĕм ёçсене колхозниксем тăрăшнипе тăватпăр. Пирĕн ёç дисциплини çулла та, хĕлле те çирĕп. Ёç яланах вёрет. Колхозниксем ёçе юраташçĕ. Бригадирсем кама та пулин ёçе кайма наряд памасан, колхозниксем хăйсем бригадирсем патне кайса ёç ыйтаççĕ. Колхозра çирĕп ёç дисциплини пулсан çеç çакăн пек пысăк çитĕнӳсем тума пулать.

Колхозра пур ёçсенче те коммунистсем тата комсомолецсем малта пыраççĕ. Коммунистсемпе комсомолецсем — колхозра пысăк вăй. Пирĕн колхоз бригадирĕсем пурте пекех коммунистсем, комсомолецсем. Вёсен бригадисем кашни çулах вăйлă тырпул туса илеççĕ. Кăçал Оленин, Сидоркин, Храмов, Суров бригадисем кашни гектартанах икçĕр пăт ытла тырă туса илчĕç. Пахча-çимĕç бригадин бригадирĕ коммунист Петр Гусев та ёçре лайăх тĕслĕхсем кăтартать.

1941 çулта эпир гектартан 200 пăт тырă туса илессишĕн кĕрешетпĕр. Халĕ бригадăсенче, звеносенче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Удобренисем турттараççĕ, юр тытаççĕ, çурт-йĕрсем тăваççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси те лайăхланать. 1940 çулта кашни ĕнерен 2000 литр сĕт суса илтмĕр. 1941 çулта кашни ĕнерен 4000 литр сĕт суса илес задача лартрăмăр. Выльăх-чĕрлĕх енĕпе ёçлеме колхоз председателĕн заместительне, чи лайăх бригадира, парти членне Ефим Сидоркин юлташа лартрăмăр.

Колхозра кăçал агротехникăна тата вырăс чĕлхине, географине, математикăна вĕренме 3 шкул организацилерĕмĕр. Ку шкулсенче агротехника ыйтăвĕсем тăрăх пулакан лекцисене колхоз председателĕ Коротков юлташ, агроном Мартынов юлташ, бригадирсем вулаççĕ. Ытти предметсене вĕрентме вăтам шкулти чи лайăх учительсене уйăрнă. Шкулта занятисене ирттерме пуçламĕш сехет пулать. Кашни эрнекунах пур бригадăсенче те политикăллă ыйтусем тăрăх занятисем пулса иртеççĕ. Политзанятисене ирттерме пуçламĕш парторганизаци чи лайăх коммунистсене уйăрнă.

А. ВАСЯНИН.
Колхоз бухгалтерĕ, парторганизаци секретарĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Вăрнар р.

ЁÇ ТУХĂÇНЕ 11 ПРОЦЕНТ ӲСТЕРМЕ ПĂХНĂ

Чăвашпотребсоюз правленийĕ 1941 çулти производство планне çирĕплетнĕ. Çак план тăрăх туса кăларакан продукцисене 30 процент ӳстерме пăхнă. 1940 çулта 12 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă пулсан, 1941 çулта 16 миллион тенкĕлĕх кăлармалла.

Тăхăнмалли тумтирсем çĕлесси уйрăмăнах нумай ӳсет. План тăрăх çĕленĕ япаласем 13892 пин тенкĕлĕх туса кăлармалла. 1940 çулта 9.891 тенкĕлĕх кăна кăларнă.

Тĕрленĕ япаласем те нумай туса кăларасçĕ. Вёсене 2030 тенкĕлĕх кăлармалла.

Ачасем валли тумтирсем çĕлесе кăларасси те ӳсет. Ачасене тăхăнмалли тумтирсем 768 пин тенкĕлĕх кăларма пăхнă.

Швейпромсоюз арталĕсем 1941 çулта спорт тумтирĕсем туса кăларма тытăнаççĕ. Вёсене пурĕ 85 пин тенкĕлĕх кăлармалла.

План тăрăх ёç тухăçне 11 процент таран ӳстерме пăхнă. Çав вăхăтрах туса кăларакан продукцисен хакне 2,1 процент йӳнетмелле.

КУÇ РОГОВИЦИНЕ КУÇАРСА ЛАРТАС ТĔЛĔШПЕ 1940 ÇУЛТА ТУНĂ ЁÇСЕМ

Куçа шур илнипе суккăрланнă çынсене куракан тăвас тĕлĕшпе тĕнчери пур çĕршывсенче те куç врачĕсем (окулистсем) пайтах ёçленĕ, анчах çак ёçре Совет Союзĕнчи врачсем кăна чаплă çĕнтерӳ тума пултарчĕç.

Чăвашсен Трахоматознăй Институчĕ 1940 çулта тунă пысăк çитĕнӳсенчен пĕри вăл—куç роговицине куçарса лартма операци тăвас ёçе вĕренсе алла илни пулса тăрать.

Академик Филатов, куç роговицине куçарса лартас ёçе ытти врач-окулистсем те вĕренчĕр тесе, вуншар çулсем хушши тăрăшса ёçленĕ. Вăл наукăпăн питех те пысăк, калама çук хаклă ёç тунă: вăл операци техникине кирлĕ пек лайăхлатнă, ыттисенчен нумай лайăхрах инструментсем шутласа кăларнă, вăлах роговицăна куçарса лартса суккăр çынсене куракан тăвас ёçре те чаплă çитĕнӳсем тунă. Вилнĕ çынсен куçĕсенчен илсе консервласа хунă роговицăсемпе анлăн усă курма пуçланă. Çапла тунăн результачĕсем те лайăхрах пулнă: вилнĕ çын куçĕсен роговицине куçарса лартнă суккăрсенчен 42 процент куракан пулнă, чĕре куçсенчен илсе лартнă çынсенчен 11 процент кăна куракан пулнă. Куçăр пуçне, вилнĕ çын куçĕсенчен илсе консервланă роговицăсемпе усă курни роговицăсем куçарса лартас тĕлĕшпе операцисене анлăн сарса яма май парать.

Пирĕн Чăваш республикинче куçа шур илнипе, уйрăмăнах трахомăна пула шур илнипе, суккăрланса юлнă çынсем нумай, çавăнпа та ĕнтĕ çавнашкал операцие кĕтекен çынсен хисепĕ пысăк. Ана çакăнтан та курма пулать: Трахоматознăй Института чирлисем нумай пыраççĕ, роговицăна куçарса лартса операци тума ыйтса нумай сырусем яраççĕ. Анчах та куçа шур илнипе суккăрланса юлнă çынсене пурне те çакна астутарас пулать: операци тăвас ыйтăва çыру янкипех татса пама май çук, мĕншĕн тесен чирлĕ çынсенчен пĕрисене операци тума юрать пулсан, теприсене вара операци тума юрамасть тата тума та кирлĕ мар. Çавăнпа та операци тăвас ыйтăва чирлĕ çынна врач тĕплĕн пăхса тухнă хыççăн кăна татса пама пулать.

1940 çулти апрель уйăхĕнчен пуçласа пирĕн институтра роговица куçарса лартас тĕлĕшпе 24 операци тунă. Операци тунă хыççăн икĕ уйăх ытларах иртнĕ хыççăн, операци тунă 19 çынтан 12 çынăн куçĕсем лайăхах курма пуçланă, 5 операци паха результатсем парайман, мĕншĕн тесен операци тăвиччен вёсен куçĕсен ăшĕнче чылай тĕрлĕ улшăнусем пулса иртнĕ.

Акă хăшпĕр примерсем. Шупашкар районĕнчи Тип-Çырма ялĕнчи 10 çула çитнĕ хĕрача Нина Колпакова 2 çулта чухне чечепе (оспа) чирленĕ. Чир хыççăн унăн пĕр куçĕ йăлтах суккăрланса юлнă, тепĕр куçне шур илнĕ. Унăн шур илнĕ куçĕ те питĕ начар курнă. Роговицăна куçарса лартса операци тунă хыççăн, унăн куçĕ лайăхах курма пуçланă. Халĕ вăл шкулта вĕренме те пултармалла.

Елчĕк районĕнчи Таяба ялĕнчи колхозникăне, 30 çула çитнĕ Павел Капитоновăне, яна хыççăн икĕ куçне те шур илнĕ, пĕр куçĕ начар курăкан пулса юлнă. Операци тунă хыççăн вăл лайăх курать, кирек мĕкле ёç тума та пултарать.

Роговицăна куçарса лартса тăвакан операцин уйрăмлăхĕ акă мĕнре: чирлĕ çынна операци тунă хыççăн, унăн стационарта нумай вăхăт—икшер уйăха çити е ытларах та—выртмалла.

Роговицăна куçарса лартас тĕлĕшпе операци тунисĕр пуçне, Институтра академик Филатов меточĕпе çĕнĕ операцисем тунă: куçа лекнĕ тĕрлĕ чирчĕре пула куç çине консервланă ткань лартнă. 1940 çулта çавнашкал операцисене 70 операци яхăн тунă. Вёсенчен 60 операцине трахома чирĕ йывăрланса кайниччен тухса тăракан панкуса пула тунă. Операцисем хыççăн куç сути 63 процент лайăхланнă. Иртнĕ çулта роговица куçарса лартассине организацилес тĕлĕшпе нумай ёçленĕ: операци тума кирлĕ хатĕрсем туянас тĕлĕшпе, çавăн пекех вилнĕ çын куçĕсен роговицисене илес ёçе йĕркелесе ярас тĕлĕшпе те ёçленĕ.

1941 çула эпир операцисем тăвас ёçе анлăн сарса яма йăлтах хатĕрленсе кĕретпĕ

Англипе Германи хушшинчи вăрçă. **Укерчĕк çинче:** Германин çӳлелле перекен орудийĕсем Бельги çыранĕнче Остенде районĕнче.
(Фото ТАСС).

▲ ▲ ▲

Индо-Китайпа Таи чиккинчи лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Тайри çар влаçĕсем пичетлесе кăларнă коммюникере каланă тăрăх, декабрĕн 28-мĕшĕнче Аран-Прадет районĕнче Таи войскисем Индо-Китай войскисен пĕр группине салатса янă.

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Таи командованийĕ кăларнă коммюникене парать. Коммюникере каланă тăрăх, Вьен-Тьянпа Нонгкай районĕнче Таипе Индо-Китай войскисем хушшинче вăрçă ĕçĕсем çĕнĕрен пуçланса кайнă. Декабрĕн 28-мĕшĕнче Франци Индо-Китайĕн войскисем Вьен-Тьянпа Нонгкай районĕнчен пеме пуçланă.

—⊙—

ЮТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Нюи-де-Дом департаментĕнче (Франция) юлашки виçĕ уйăх хушшинче, пытанса ĕçленĕшĕн айăпласа, 60 çынна концентрацеллĕ лагерьсене янă.

* * *

Англире сывăх вăхăтрах васкавлă йĕркепе стандартлă суднăсем тума тытăнаççĕ. Суднăсен чаçĕсене заводсенче тăваççĕ те судоверфьсене яраççĕ, унта вара вĕсене пухса суднăсем тăваççĕ.

* * *

Чунцин сывăхĕнче музыка енĕпе талантлă ачасен шкулĕ пур. Ачасенчен нумайĕшĕ — беженецсемпе салтаксен ачисем. Çак ачасене пурне те государствăпа общественность пăхса усрать. Декабрĕн 26-мĕшĕнче ачасен концертĕ пулнă, концерта питех те юратса итленĕ. Концерт дирижерĕ 15 çулти ача пулнă.

* * *

Эквадорта пур шкулсенче те çар ĕçне вĕрентмелле тунă. Çавăн пекех тата 18 çултан пуçласа 50 çула çитнĕ граждăнсене те çар ĕçне вĕрентеççĕ, вĕсене национальнăй гварди составне кĕртеççĕ.

* * *

Китайри хĕрлĕ хĕрес обществинче 140 пин член шутланать. Фронтсенче çак обществăн 90 пункчĕ ĕçлет. Медицина персоналĕнче — 2700 çын. Америкăран кашни уйăхрах 50 пин долларлăх тĕрлĕ медикамент илсе тăраççĕ.

* * *

Норвегире кунне пĕр çын пуçне памалли çăкăр нормине 300 грамран 200 грама çити чакарнă, пĕр эрне хушшинче памалли сахăр нормине 250 грамран 200 грама çити, кофе памалли нормăна 60 грама çити чакарнă. Бутербродсене карточкăпа памалла тунă.

* * *

Данире декабрĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 3-мĕшне çитичен супăнь сутма чарнă. Çак вăхăт хушшинче мĕнпур запассене шута илеççĕ. Супăнь памалли нормăсем çинчен çĕнĕ çул кунĕнче пĕлтереççĕ.

* * *

Румынире февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тулă çăнăхĕпе сахалрах усă курмалла тăваççĕ. Çăкăрсене 20 процент кукуруза çăнăхĕ хутĕштарса пĕçереççĕ.

* * *

Венгри правительстви кăларнă распоряжени тăрăх, Венгрире çĕнĕ çул тĕлне пĕр сысна çури те пусма юрамасть. Халиччен 150 пин сысна çурине яхăн пуснă.

* * *

Саудире Сауди Аравийĕн корольне Ибн-Сауда тата унăн режимне хирĕç организацилене заговора тупнă. Заговора хутшăннă икĕ çынна вĕлермелле тунă, ыттисене тĕрмене хупса лартмалла тунă.

—◆—

КИТАЙРИ ВĂРÇА

Центральнăй Китайра. Декабрĕн 28-мĕшĕнче, Цзянси провинцийĕнче, Наньчанран хĕвеланăç еннелле 50 километрти тусем çинче Япони войскисем китаецсене хирĕç атака тунă. Çапăçу декабрĕн 29-мĕшĕнче пынă.

Сурçĕр Китайра. Шаньси провинцийĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче, Цзиньчэн районĕнче, пысăк мар çапăçусем пыраççĕ.

Кăнтăр Китайри фронтри лару-тăру çинчен сведенисем çук.

* * *

Декабрĕн 30-мĕшĕнче Япони самолечĕсен виçĕ группи Сычуаньпе Хубэй провинцийĕсем çине пырса тапăннă. Икĕ группи Хубэй провинцийĕнчи чылай пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Виççĕмĕш группинче 27 самолет пулнă. Вĕсем Сычуань провинцийĕ çине вĕссе пынă, анчах каялла çавăрăнса кайнă. Декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС).

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Германи çарĕн верховнăй командованийĕ çапла пĕлтерет: ыран декабрĕн 29-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Плимутри порт сооруженийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Портра пушарсем тухнă.

Декабрĕн 29-мĕшĕнче кăнтăрла Германи самолечĕсем Англин хĕвелтухăç çыранĕнчи вăрçă ĕçĕшĕн кирлĕ объектсем çине бомбăсем пырса пăрахнă, кунсăр пуçне, Крури çар завочĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Гарвичран хĕвелтухăç енче грузовой судно çине бомбăсем пăрахнă. Суднăна вут хыпса илнĕ. Лондондеррирен çурçĕр-хĕвеланăç еннелле 200 километрта противникăн пĕр суднине путарнă.

Тинĕс артиллерийĕ Ла-Манш çыранĕ патне çывхарса пыма хăтланнă çар карапĕ çине пенĕ.

Ыран декабрĕн 30-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Лондон çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Противникăн темиçе самолечĕ Германи çине тата оккупациленĕ территори çине темиçе бомба пырса пăрахнă. Бомбăсем уя е тинĕсе ӳкнĕ. Противникăн икĕ самолетне персе антарнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Англи авиацийĕн министерстви çапла пĕлтерет: Европăра çанталăк начар пулнине кура ыран декабрĕн 30-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ хăйĕн операцийĕсене анлăн сарса ярайман. Самолетсен пысăк мар группи Германири çар объекчĕсем çине, çавăн пекех тата Германи оккупациленĕ территорири портсемпе аэродромсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи самолечĕсем бомбăсемсĕр пуçне тата листовкăсем пăрахнă. Çак операцисенче пулнă икĕ самолет хăйсен базисене тавăрăнман.

Лондон çине бомбăсем пырса пăрахни

БЕРЛИН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер каçхине Германи авиацийĕ Лондон çине фугаслă бомбăсемпе вут чĕртсе яракан бомбăсем пырса пăрахнă. Нумай тĕлте пысăк пушарсем тухнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, противникăн ĕнер Лондон çине вĕссе пынă самолечĕсене хирĕç зенитнăй артиллери питех те вăйлăн персе тăнă. Германи самолечĕсен атаки пигех те вăйлăн пулнă. Вĕсем вут чĕртсе яракан бомбăсем нумай пăрахнă. Нумай çуртсене çĕмĕрсе тăкнă.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Лондонран пĕлтернĕ тăрăх, Германи авиацийĕ пырса тапăннă хыççăн тухнă пушарсене сӳнтерме хуларн мĕнпур пушар командисене мобилизациленĕ. Икĕ сехет çурă хушши Лондонпа ытти пунктсем хушшинче радио тăрăх сыхăнса каласа май пулман.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ыран декабрĕн 30-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Лондон çине пырса тапăннипе миллионшар фунт стерлинглăх сиен пулнă. Хула халăхĕ хушшинче вилнисемпе аманнисен хисепĕ питех те пысăк, тесе шутласçĕ.

Германия Англи çине тапăнса кĕресси çинчен

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Англири «Санди таймс» хаçатăн обозревателĕ çапла çырать: Германи Ирланди çине тапăнса кĕме шутласан, вăл хăйĕн сывлăшри десанчĕсене пуринчен маларах Бантри бухтипе Уотерфорд хушшинчи территори çине интарса хăварма пултарать. Англи Ирландире самолетсенчен сыхланас ĕçе ытти вырăнсенчи пек мар, начартарах йĕркелесе янă. Çурçĕр Ирландире вăйлă гарнизонсем тăраççĕ пулсан, унта Англи авиацийĕн базисем нумай пулсан, Кăнтăр Ирландире (Эйрере) вĕсем çителĕксĕр, унта тапăнса кĕме çăмăлрах. Германи чаçĕсем Кăнтăр Ирландире анса юлас пулсан, вĕсем Англипе Америка хушшинче пароходсем çӳретес ĕçе йăлтах чарса лартма пултараççĕ. Çак базăсене Германи войскисем туртса илсен, Англи çине тапăнса кĕме виççĕмĕш фронт пулса тăрать. Англине халех те ĕнтĕ Франципе Норвеги енчен тапăнса кĕрессипе хăратаççĕ. «Англи çине тапăнса кĕнĕ вăхăтра, — тет обозреватель, — Англи истребителĕсене урăх çĕрелле пăрса ярас тесе, Германи вăйĕсем Кăнтăр Англине атакăлĕç. Çакă вăл чăннипех те пулма пултарать».

Англи самолечĕсен ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕш. (ТАСС). Англи авиацийĕн министерстви çапла пĕлтерет: ыран декабрĕн 29-мĕш тенĕ чух çĕрле, çанталăк условийĕсем начар пулнă пулсан та, Англи бомбардировщикĕсем Роттердампа Антверпени нефтехранилищесем çине, çавăн пекех тата Булоньпе Шербургри портсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Лориан çине татах тепĕр хут пырса тапăннă, унта пысăк пушар тухнă. Çак операцисенче пулнă икĕ самолет хăйсен базисене тавăрăнман.

БЕРЛИН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: декабрĕн 28-мĕшĕнче Англи самолечĕсем Голланди çине пырса тапăннă. Вилнисемпе аманнисем пулман. Юлашки кунсенче Голланди тĕлĕнче Англин икĕ самолетне персе антарнă.

Албанири вăрçă ĕçĕсем

АФИНЫ, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Тепелене районĕнче грексем çĕнĕ высотасемпе укрепленийлĕ пунктсене туртса илнĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Тепелене секторĕнче малалла кайнă хыççăн, грексем Валона хӳлинчен 35 миляра тăраççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци войскисем Валона патĕнчи виçĕ яла туртса илнĕ, халĕ вĕсем Валона патнелле сывхарса пыраççĕ.

Клисурăран çурçĕр енче грексем Итали войскисен атакисене сирсе янă, Италин нумай салтакĕсене тыткăна илнĕ. Клисурăпа Логора хушшинчи фронтра Италипе Греци хушшинче пысăк çапăçусем пыраççĕ. Икĕ енĕ те подкрепленисем, вăрçă материалĕсем илсе тăраççĕ. Итальянецсем тусем çинчи вăйлă укрепленийлĕ позицисем çинче тăраççĕ. Италин тытăна лекнĕ салтакĕсем пĕлтернĕ тăрăх, юлашки темиçе кун хушшинче фронта итальянецсен икĕ дивизийĕ пырса çитнĕ.

БЕЛГРАД, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). «Политика» хаçат çапла пĕлтерет: çурçĕр фронтĕнче, Лин хули патĕнче, пысăк çапăçусем сарăлса кайнă. Итальянецсем хăйсен чи лайăх войскисене çапăçăва кĕртнĕ, анчах та грексем çине тăрсах Лин патнелле сывхарса пыраççĕ. Грексен малти отрячĕсенчен пĕри хула патнех пырса çитнĕ.

ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

РИМ, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Киренаика чиккинчи районра, Барди секторĕнче, икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине артиллерирен персе тăраççĕ. Противникăн механизированнăй чаçĕсем укрепленисем патне сывхарса пыма хăтланнă, анчах вĕсене каялла хăваласа янă. Итали авиацийĕ противникăн механизированнăй чаçĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Противникăн нумай танкĕсемпе автомашинисене пĕтерсе тăкнă тата сиен кӳнĕ. Джарабуб секторĕнче противник атакине сирсе янă.

Греци фронтĕнче противник атакисене сирсе янă. Противнике пысăк сухатусем кӳнĕ. Итали авиацийĕ противник порчĕсемпе укрепленийĕсем çине тата противник войскисем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Превезăри тинĕс базинче пушарсем тухнă, портра тăракан карапа сиен кӳнĕ. Англин виçĕ самолетне персе антарнă.

Ыран декабрĕн 30-мĕш тенĕ чух çĕрле противник самолечĕсем Неаполь çине вĕçĕмренех икĕ хут пырса тапăннă. Вĕсем листовкăсем тата темиçе бомба пăрахнă. Пурăнмалли темиçе çурта сиен кӳнĕ. Çичĕ çын вилнĕ тата темиçе çын аманнă.

АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Çапла пĕлтереççĕ: декабрĕн 29-мĕшĕнче Англи авиацийĕ противникăн Эль-Тмимири, Дернăри тата Эль-Газалăри самолетсем лартмалли площадкисем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Бомбăсем тивнипе пушарсем тухнă.

Комсомолецсем колхоза пулăшаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Супарти «Партизан» колхозри комсомол пуçламăш организацинче тăракан комсомолецсем колхоз производствине активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Чылай комсомолецсем колхоз ĕçĕнче паха примерсем кăтартаççĕ. Организацинче 18 комсомолец. Т. Павлов комсомолец — колхоз счетовочĕ пулса ĕçлет. Колхозăн учетпа отчет ĕçĕнче йĕркелĕх тунă. Вăл кашни уйăхра колхозниксем миçе ĕçкунĕ тунине список туса, курăнмалли вырăна çакать.

В. Васильев комсомолец — колхозри ветсанитар. Колхозниксемпе колхозницăсем Васильева юлташла юратаççĕ. Мĕнпĕн тесен, вăл выльăхсем чирлесен çийĕнчех пулăшу панипе сахал мар выльăхсене вилесрен çăлса хăварнă. Т. Кузьмина акушерка хăйĕн ĕçне кăтартуллă туса пырать.

Комсомолецсем колхозниксем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçсене кирлĕ пек туса пыраççĕ. Вĕсем колхоз правленине кулленхи ĕçре пулăшаççĕ. Комсомолецсем тата колхозниксем хушшинче çар ĕçне вĕренессине те йĕркелерĕç.

М. Федоров.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Бурщик Иван Шарый тунă рекорд

КРИВОЙ РОГ, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Роза Люксембург ячĕпе тăракан шахта управленийĕн «Новая» шахтинче ĕçлекен бурщик-семиволосовец Иван Шарый, XVIII партконференци ячĕпе вахтăна тăрса, ĕнер иккĕмĕш сменăра ĕç тухăçлăхĕн питех те чаплă рекордне тунă. Сменăра 74 тонна руда кăлармалла пулнă пулсан, вăл 2.300 тонна кăларнă, заданине 3.108 процент тултарнă.

„Производственное обучение" ятлă çĕнĕ журнал

МУСКАВ. Ĕç вăйĕсен резервисен Главнăй Управленийĕ 1941 çулти январьтен пуçласа «Производственное обучение» ятлă журнал кăларма тытăнать. Журнал ФЗО шкулĕсенчи, ремесленнăй тата чугунçул училищисенчи мастерсем, вĕренӳпе производство пайĕсен заведующийĕсем тата вĕсен директорĕсем валли пулать. Журнал уйăхра пĕр хут тухмалла.

Çĕрлехи военизированнăй поход

ЧИТА. Ыран декабрĕн 29-мĕш тенĕ чух çĕрле хулари çамрăксен массăллă военизированнăй походĕ—йĕлтĕрлĕ тата çуран поход пулса иртнĕ. Похода 4.000 çын хутшăннă, вĕсем хушшинче хĕрачасем пин çын ытла пулнă. Арçынсем 25 километр, хĕрачасем 15 километр тăршшĕ дистанцине иртсе тухнă. Поход участникĕсем пĕр километр хушши противогазсем тăхăнса пынă. Çак поход—Хĕрлĕ Çар XXIII çул тулнă ятпа пулмалли Пĕтĕм Союзри йĕлтĕр кросне хатĕрленес тĕлĕшпе пигех те паха тренировка пулнă. 3 пин çынна яхăн «Готов к труду и обороне» комплексĕн нормине панă.

„Астрономический ежегодник СССР на 1941 год"

ЛЕНИНГРАД. Çак кунсенче «Астрономический ежегодник СССР на 1941 год» пичетленсе тухнă, ăна профессор Н. И. Идельсон редакциленĕ.

Хамăрăн астрономи ежегодникĕ пичетленсе тухни, совет астрономийĕн тата вычислительнăй математикăн çĕнĕ çитĕнĕвĕ пулса тăрать. Çавăн пек ежегодниксене тĕнчери тăватă çĕршывра кăна кăларнă пулнă. Хăйĕн пысăкшăлĕпе тата материалсен пуянлăхĕпе совет ежегодникĕ ютçĕршывсенчи чи лайăх ежегодниксенчен пĕртте кая мар.

Кĕнекере астрономи тăвакан сăнавсене тĕплĕн вĕреннемелли сведенисене паннă. Тĕнчери мĕнпур 216 обсерватори кординачĕсене те кăтартнă, вăл шута Совет Союзĕнчи 22 обсерватори те кĕрет.

Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенчи çĕнĕ клубсем, библиотекăсем, музейсем

МИНСК. Иртнĕ çулта республикăн хĕвеланăç облаçĕсенче 1000 ытла вулав çурчĕ, районсенчи социализмлă культура çурчĕсем 97 çурт, 380 библиотека, 5 музей уçнă.

Çĕнĕ çулта çавăн пек учрежденисен шучĕ татах ӳсет. Вилей, Белосток, Брест, Барановичи тата Пинск облаçĕсенчи ялсенче вулав çурчĕсем татах 176 уçаççĕ. Гродно хулинче Э. Ожешко ячĕпе литература музейĕ организацилеççĕ.

Кишинев хули 1941 çулта

КИШИНЕВ. Хула центрĕнче культура дворецĕ, пит пысăк кинотеатр туса пĕтереççĕ. Оперăпа драма театрĕ тăваççĕ, унта 1.200 çын вырнаçмалăх пулать. Кишинев хĕрринче çавтери илемлĕ вырăнта культурăпа канун центральнăй паркне тăваççĕ. Парк валли 30 гектар уйăрса панă.

1941 çулта пысăк холодильникăн, кондитер фабрикин, çăкăр пĕçерекен завод строительствине туса пĕтереççĕ, шыв памалли системăна, вокзала реконструкцилеççĕ. Çĕнĕрен тунă табак фабрикин оборудованине туса çитереççĕ, вăл фабрика çулталăкне 2,5 миллиард папирос туса кăлармалла. Кунсăр пуçне, ача суратмалли çĕнĕ çурт, санатори станцийĕ, банно-прачечнăй комбинат тата шыв бассейнĕ тăваççĕ.

Волыньре ĕнесĕр хуçалăх çук

ЛУЦК. Волыньре пĕтĕм хресчен хуçалăхĕнчен виççĕмĕш пайĕнчен пĕр пайĕн е 14.580 хресчен хуçалăхĕн ĕнесем пулман. Совет влаçĕ туса хунă хыççăн вĕсенчен 7 пин хуçалăхне помещиксен именийĕсенчи выльăхсене панă. Ытти ĕнесĕр хуçалăхсене правительство ĕнесем туянма 1.575 пин тенкĕ кивçен панă.

Донбасри горняксене канма 30 миллион тенкĕ укçа

СТАЛИНО. 1940 çулта çĕршыври чи лайăх курортсенче — Сочире, Ялтăра, Кисловодскра — тата кăнтăрти ытти курортсемпе кану çурчĕсенче Донбасри горняксем 87 пин çын пулнă. Санаторисенче шахтерсен ачисем 2200 ача каннă. Горняксене тата вĕсен ачисене канма, сывалма 1940 çулта социальнăй страховани бюджетĕнчен 30 миллион тенкĕ расходланă.

Ачасем çĕнĕ çул елки туянаççĕ.
К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Каникул савăнăçлă иртет

ÇЕМЕРЛЕ. Хулари Куйбышев ячĕпе тăракан 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулта хĕллехи каникул вăхăтĕнче бал-маскарад, çĕнĕ çул елкисем, вечерсем, йĕлтĕрçĕсен похочĕсем, оборона вăййисем, лекцисемпе докладсем пулса иртеççĕ.

Каникула çакăн пек ирттерме ачасемпе учительсем хатĕрленсе çитнĕ.

Шкулти хор кружокĕ вечерсенче тухса юрлама çĕнĕ юрăсем вĕренчĕ.

С. Андреева.

—⊙—

Ворошилов çинчен çырнă повесть чăвашла тухать

Сталин юлташăн чи çывăх соратникĕ Климент Ефремович Ворошилов юлташ çуралнăранпа 1941 çулти февраль уйăхĕнче 60 çул тултарать. Çак палăк куна чысласа Чăвашсен Государство издательствинче Гаврилов çырнă «Луганцы» ятлă повесть пичетленсе тухать. Ку произведени — Ворошиловăн ĕçĕсемпе пурнăçĕ çинчен çырнă повесть. Вăл произведенине куçарса пĕтернĕ ĕнтĕ. Çитес вăхăтра ăна пичете памалла.

Н. Юм.

—⊙—

Çамрăк купăсçă

ШАХАСАН. Ямашри вăтам шкулта 6-мĕш класра вĕренекен Александр Семенов хуткупăспа питĕ ăста вылять. Икĕ ретлĕ хуткупăспа 30 кĕвĕ ытла пĕлет. Вăл шкулта отлично паллăсемпе вĕренет.

— Эпĕ музыкант пулатăп. Кунтан вĕренсе тухсан музыка шкулне вĕренме каятăп. Халь пире вĕренме çул ççă, — тет А. Семенов.

Вас. Яковлев.

—⊙—

Суккăр ачасен хорĕ

Улатăрти суккăр ачасен хорĕ кашни çулах лайăхланса пырать. Хорта тăракансен хисепĕ 25 ачана çитрĕ.

Шкулта оркестр пур. Кунта та суккăр ачасем тăраççĕ. Оркестрта халăх инструменчĕсем тата икĕ баян пур. Суккăр ачасем музыка ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ.

Çĕнĕ çул ячĕпе шкулта вечер пулать. Вечерта суккăр ачасем хăйсен пултарулăхĕсене кăтартаççĕ. Вĕсем вечерта ташлама, юрлама, баянпа выляма вĕренсе çитнĕ те ĕнтĕ.

Н. ВЛАДИМИРОВ.

—⊙—

Çар ĕçне вĕренеççĕ

КАНАШ. Осоавиахимăн медицина шкулĕнчи пуçламăш организацийĕ кăçалхи вĕренӳ çулĕнче чылай çитĕнӳсем турĕ. Шкулта çар ĕçне вĕренме группăсем организациленĕ, вĕсенче 300 çынна яхăн вĕренеççĕ. Çар ĕçне вĕренессине çĕнĕлле йĕркеленĕ май, Осоавиахим членĕсен йышшĕ 367 çынна çитрĕ.

ПВХО значокĕн нормисене 250 çын панă. Ку шутран допризывниксем 64 çын.

Шкулта йĕлтĕрçĕсен ăмăртуне хатĕрленеççĕ, ятарласа 3 команда йĕркеленĕ. Командăсем кулленех тренировкăсенче пулаççĕ.

П. ВОРОБЬЕВ.

„На берегу Невы" пьесăна лартма хатĕрленеççĕ

Чăвашсен Государство Академи театрĕ çĕнĕ çула пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕ.

Искусство ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕн театрсен главнăй правленийĕ театрти вырăссен труппине «На берегу Невы» пьесăна лартма ирĕк пани çинчен ятарласа пĕлтернине илнĕ. Асăннă пьесăна лартма пуçăнма Чăваш АССР искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕ Е. А. Токмаков юлташа çирĕплетнĕ. В. И. Ленин рольне Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. И. Праудин вылять.

Театрти вырăс труппи çак пьесăна лартса пама пысăк хастарлăхпа тытăнать.

Театрти чăваш коллективĕ çак кунсенче К. В. Иванов поэми тăрăх Алгерпа Кăлган çырнă «Нарспи» драмăна лартма тытăнать. Театр XVIII партконференцине çак пьесăсене лартнине парнелеме шутлать.

—◆—

Вĕренӳ музейĕ

Шупашкарти Пединститутра зоологи музейĕ туллин пынă. Унта экспонатсем питĕ нумай. Совет Союзĕнчи тинĕссенче пурăнакан пулăсене тата чĕрчунсене нумай пухнă, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи тинĕссенчен çеç илсе килеймен. Атăлта тата унта Чăваш республикинчен юхса кĕрекен шывсенче пурнакан пулăсене 40 тĕслĕ йăха яхăн пухнă.

Студентсем кăçалхи çу кунĕсенче хурткăпшанкăсем нумай пухнă, вĕсен хисепĕ 200 яхăн çитет. Çак хурткăпшанкăсем те музейри экспонатсем пулчĕç.

Çак кунсенче музей çĕнĕ экспонатсемпе татах та пуянланать. Музей валли 5 метрлă кит шăмми, 250 сантиметрлă акула, 135 сантиметрлă зубатка, 152 сантиметрлă треска тата 120 сантиметрлă полтус илсе килеççĕ. Кунсăр пуçне вырăнти кайăк-кĕшĕксен экспоначĕсем те йышланаççĕ.

—◆—

Йĕлтĕрсем тăваççĕ

ÇЕМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). «Труженик» тата Паланри заводсенче йĕлтĕр тăвакан производствăсем организацилерĕç.

«Труженик» завод коллективĕ кăçал январĕн 15-мĕшчен 1500 мăшăр, Паланри завод 350 мăшăр йĕлтĕр туса кăлларма обязательство илчĕç. Паянхи куна вĕсем 200 мăшăр туса кăларнă та ĕнтĕ.

—◆—

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн парткабинетĕнче

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн парткабинечĕ халиччен центральнăй библиотека вырнаçнă çурта кусрĕ (Роза Люксембург урамĕ, 3-мĕш № çурт).

Парткабинетра читальнăй залсем виççĕ, лекцисем ятларласа тепĕр çăх уйăрнă, 100 тĕрлĕ хаçат-журнал сырăнса илнĕ, пуян библиотека пур. Читальнăй залпа библиотека январĕн 2-мĕшĕнчен пуçласа кашни кунах, каннамалли кунсемсĕр пуçне, ирхине 9 сехетрен пуçласа каçхине 10 сехетчен ĕçлеççĕ.

Парткабинета пурте ирĕклĕнех кĕме пултараççĕ.

ПАРТКАБИНЕТ.

—◆—

ТӲЛЕВЛĔ ЛЕКЦИ

Декабрĕн 23-мĕшĕнче, Çĕрпӳ хулинче, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕпе лекци пулчĕ. Лекцине ВКП(б) Обкомĕн лекторĕ Осипов юлташ вуласа панă.

Лекци итлеме пурĕ 270 çын пухăнчĕç.

Ответлă редактор
Р. О. МАЛЮТИН.

Согласно постановления III-го пленума ЦК союза рабочих комжилстроительства — Центра, Чувашский областной комитет союза рабочих комжилстроительства с 1 января 1941 года **ЛИКВИДИРУЕТСЯ.**

Организации, госучреждения и частные лица, имеющие расчеты с обкомом союза, должны пред'явить свои претензии в ликвидком до 15 января 1941 года по адресу: г. Чебоксары, ул. Кадыкова, 4. После указанного срока никакие претензии приниматься не будут.

Страхователи подведомственные союзу комжилстроительства расчетные ведомости за IV квартал 1940 года должны представить в обком союза не позднее 8 января 1941 года и учинить полный расчет по задолженности на 1 января, перечислив на текущий счет № 158/021 ЦК союза Комжилстроя.

Ликвидком.

2—1

„Главкинопрокатăн" Чăваш республикинчи контори
РЕСПУБЛИКĂРИ ЭКРАНСЕМ ÇИНЕ
ВОЗВРАЩЕНИЕ
ятлă, саслă, художествăллă çĕнĕ фильм кăларать.
ЛЕНИНГРАДРИ ЛЕНИН ОРДЕНЛĔ „ЛЕНФИЛЬМ" КИНОСТУДИЙĔН ПРОИЗВОДСТВИ.
Режиссер—ЯН ФРИД.
Паллăрах рольсенче:
Республикăн тава тивĕçлĕ артистки Т. ГУРЕЦКАЯ, Республикăн халăх артисчĕ Н. СИМОНОВ, Вова ТУМАЛАРЬЯН.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. **Телефонсем:** редакторăн—0—67, редактор заместителен—3—97, редакци секретарĕ — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—07, экономика пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Капкăн» тата «Ĕçхĕрарăмĕ» журналсен—6—23, «Ленин сулĕпе» журналăн—0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 3033.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № 852, ф. б. 59×84 п. л.